Руль умĕнчи çынсенчен чылайăшĕ ПАИ сотрудникĕсене килĕштермест
ПАРАКАНРАН... ИЛМЕН 2

Ирина Солдатовăпа Юрий Леонтьев совет спорчĕн историйĕнче паллă йĕр хăварнă
УХĂÇĂСЕН «ТŸПИНЧИ» ИКĔ ÇĂЛТĂР 3

Пирĕн ентеш Гаврил Мокин Мускава хÿтĕлесе Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ
Л.ДОВАТОРПА ЮНАШАР 4

ПАЯН ВУЛĂР ТЕПĔР НОМЕРТЕ

Çĕр пуянлăхĕпе тулли усă курмалла: пĕр лаптăк та ахаль ан вырттăр
ХРЕСЧЕН, ПУЛĂХЛĂХА УПРА! 2

Ялта шыв ыйтăвĕ шăрăх вăхăтра уйрăмах çивĕч
«ТĂВАН ЕН» страница 3

Пукаш чăвашĕ Василий Михалкин Семен Буденнăйăн кавалерийĕнче çапăçнă
ÇАР ПРОКУРОРĔ 4



чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

115 /26521/ № Юн кун, 2014, çĕртме (июнь), 18 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


*Лару*

## Тимсĕрлĕхе çул касармасть

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пынипе республикăри çул çинче хăрушсăрлăх туса хурассипе ĕçлекен Правительство комиссийĕн ларăвĕ иртрĕ. ШĔМ çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн патшалăх управленийĕн Чăваш Енри пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан Геннадий Чурбанов республикăри автомобиль çулĕсенчи тата чукун çул каçмисенчи 2014 çулхи 5 уйăхри лару-тăрупа тата вĕсенче хăрушсăрлăх туса хумалли мерăсемпе паллаштарчĕ.***

– Кăçал 5 уйăхра ЧР çулĕсенче 592 инкек /пĕлтĕр çак вăхăтра – 624/ пулнă, вĕсенче 79 çын /82/ вилнĕ, 703-шĕ /777/ аманнă. 8 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче – инкек шучĕ, вуннăшĕнче вилекенсен йышĕ ÿснĕ. Инкек-синкек ытларах – Елчĕк, Тăвай, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче тата Çĕнĕ Шупашкарта. Элĕкпе Красноармейски тăрăхĕсенчи тата Канашпа Çĕнĕ Шупашкарти çулсем çинче çынсем пĕлтĕрхинчен нумайрах вилнĕ, – терĕ Геннадий Васильевич.

Инкексен тĕп сăлтавĕ – транспорт çапăнни. Кăçал вăл 9,6% чакнă пулин те мĕн пур инкекĕн 38,3 процентне йышăнать. Иккĕмĕшĕ – çуран çÿрекенсене таптани. Кăтарту пĕлтĕрхинчен 13,3% сахалрах, анчах унăн тÿпи – 37,3%. Велосипедистсем çине пырса кĕресси икĕ хут ытларах ÿснĕ. Шар кураслăхăн пысăк пайĕ – ялсенче/65%/.

Ÿсĕр водительсене пула инкек тÿсесси 25% сахаланнă пулин те Шăмăршă, Тăвай, Йĕпреç, Вăрмар, Елчĕк, Етĕрне районĕсенче лару-тăру çав-çавах йывăр. Ачасемпе çыхăнни 10,5% чакнă, çав вăхăтрах Сĕнтĕрвăрри, Елчĕк, Çĕрпÿ таврашĕсенче тата Çĕнĕ Шупашкарпа Шупашкар хулисенче ÿсĕм пур.

Инкек-синкек çул-йĕр паллисем кирлĕ çĕрте çуккипе, вĕсем япăх палăрнипе, асфальт ванса тăнипе, хĕлле юр тасатманран çул хĕсĕннипе, тĕттĕм вăхăтра çутă çутманнипе тата нумай сăлтавпа та пулнă.

Республикăра 107 чукун çул каçми тунă. 21-шĕ урлă автобуссем тăтăш каçаççĕ. 2011-2013 çулсенче темиçе авари пулнă тăк, кăçал ку енĕпе лару-тăру йĕркеллех-ха.

Çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕ тĕлне 92 каçмана тĕрĕсленĕ те 49-че çитменлĕхсем тупнă. Чукун çул каçминче хăрушсăрлăха ÿстерес тесен сигнализаци, автомашинăна вăхăтлăха чармалли хатĕр /вăл пур çĕрте те çук/ вырнаçтармалла, çуран çÿрекен валли çул тумалла.

ЧР вĕренÿ тата çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Надежда Дмитриева çу кунĕсем пуçланнă май ачасене çул-йĕр правилисемпе тĕплĕнрех паллаштарасси /сывлăха çирĕплетекен лагерьсенче ăна пурнăçлама шăпах меллĕ/, вĕсене автобуспа илсе çÿрекенĕ чухне хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси çинчен калаçрĕ.

Ачасене çул-йĕр азбукине ăса хывма çамрăк инспекторсен отрячĕсене çÿрени нумай пулăшать. ЮИДçăсен чĕрĕк ĕмĕр ытла аталанакан юхăмĕ уйрăмах Вăрнар, Йĕпреç районĕсенче, Шупашкар хулинче анлă сарăлнă.

– Ку чухне шкулсенче мĕн пурĕ 329 автобус, 302-шĕпе ачасене пĕлÿ çуртне тата каялла леçеççĕ. Вĕсем 774 маршрутпа 1412 ялтан 12663 вĕренекене илсе çÿреççĕ. Кĕтмен лару-тăруран сыхланма пурне те ГЛОНАСС тытăмĕпе тивĕçтернĕ, – терĕ Надежда Викторовна.

Çулла ача-пăча ирĕкре. Пушă вăхăта урамра, çурт картишĕнче иртерет, çавна май транспортпа час-часах тĕл пулать. Вĕсене ашшĕ-амăшĕн асăрханулăх çинчен кулленех аса илтермелле.

Çуран çÿрекен те, автомашина та çул çине хĕллехинчен ытларах тухать. Сыхланулăх, тимлĕх кашнинех кирлĕ

■ Валентин ГРИГОРЬЕВ

*Ачасен канăвĕ*

## Ăс-тăнпа ÿт-пÿ пиçĕхĕвĕ – чи кирли

***Шкул ÿсĕмĕнчи ачасемшĕн чи савăк вăхăт – çуллахи кунсем. Вăрăм каникула мĕнле, ăста иртерессине чылайăшĕ малтанах палăртса хурать. Ялта сывăх тăванĕсем, аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ пур тăк хулари ачасем пăчă хваттерте тăрса юлмаççĕх. Вăхăта усăллă иртерсем ыттисем мĕнлерех майсем тупаççĕ-ха?***



cap.ru сайтĕн сăн ÿкерчĕкĕ

Республика ертÿлĕхĕ ачасен çуллахи канăвне тивĕçлĕ шайра йĕркелес ыйтăва айккине пăрмасть. Хула тулашĕнчи лагерьсене çак тапхăрта туллин ĕçлеттернисĕр пуçне пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан кашни учрежденирех шкул çумĕнчи лагерь йĕркелессине йăлана кĕртнĕ.

Мĕнлерех канаççĕ-ха вĕсенче ачасем? Çамрăк организма юрăхлă апатланаççĕ-и, ÿт-пĕве пиçĕхтерме е ăс-тăна, пултарулăха аталантарма майсем çителĕклĕ-и? Çак ыйтупа кăсăкланса Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, вĕренÿпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов вырăна тухса курма тĕв турĕç. Тĕп хулари 37-мĕшпе 47-мĕш шкулсен çумĕнчи лагерьсен ĕç-хĕлĕпе паллашрĕç.

Уйрăм предметсене тарăннăн вĕрентекен 37-мĕш шкулта иртнĕ вĕренÿ çулĕнче 924 ача пĕлÿ илнĕ. Вĕсенчен 93-шĕ "Çу – кĕске пурнăç" программăна йĕркеленĕ лагере çÿрет. Асăннă программа сюжет-роль вăййине никĕсленнĕ. Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче уçăлнă лагерь уйăх вĕçленичченех тăсăлĕ. "Хавасла стартсем", "Чап минучĕ", стена хаçачĕсен конкурсĕсем, КВН – ачасем хаваланупа кĕтекен савăк мероприятисем. Паллах, республика ертÿлĕхĕнче тăрăшакан сумлă çынсем килсе çитнĕ ирхи зарядкăна та кашниех нумайлăха ас туса юлĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан 47-мĕш шкул çумĕнчи "Топотушки" лагере 1-6-мĕш классенче вĕренекенсем 119-ăн çÿреççĕ. Ачасен канăвне кăсăклă та хаваслă йĕркелессишĕн 8 вожатăй тăрăшать. Сăмах май, ушкăнсене ертсе пымашкăн ку пĕлÿ учрежденийĕнче çамрăк специалистсем йышлă пулнипе меллĕ: 30 çула çитмен вĕрентекенсем шкулта 14-ăн. Аслă классенче вĕренекен лидерсем те вĕрентекен-вожатăйсене пулăшса пыраççĕ.

...Чечек клумбисене ачасен пĕр ушкăнĕ калчасем лартнине курсан Михаил Игнатьев вĕсем патне пымасăр чăтаймарĕ.

– Ÿсен-тăран лартакан çын усал пулмастех. Эсир ĕçе хăнăхса çитĕнни пархатарлă. Çĕр çинче тăрмашма кăмăллакан çын Тăван çĕр-шывне те юратать, – сăмахĕ ачасен чунĕсене витертĕр тесе хăй те пĕшкĕнчĕ, темиçе чечек лартрĕ.

Шкул ачисен сывлăхне çирĕплетесси – çуллахи лагерĕн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Çавна май спорт лапамĕ пушанса та курмасть ку яхăнта. Хăнасем пынă кун кĕçĕн классенчисем эстафетăра тупăшатчĕç. Çулталăк каялла янтăланă баскетбол площадкинче аслăраххисем шавлатчĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăйсем патне пушă алăпа мар, парнесен пысăк çыххипе килнине курсан /волейбол, теннис мечĕкĕсем, теннис ракеткисем т.ыт.те/ арçын ачасемпе хĕр ачасен кăмăлĕ тата хăпартланчĕ.

Тутлă апатсăр вара кăмăлтуйăм çĕкленĕйĕ пирки калаçма пулать-и? Шкул столовăйĕнче техĕмлĕ апат хатĕрлеме условисем çителĕклĕ. Кунта хальхи йышши оборудовани лартнă, сĕтел-пукан – çĕнĕ, тÿлеве карточка тытăмĕпе йĕркеленĕ. Кăçал лагерь валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрманнине пула ачасене кунне икĕ хут вĕри апат çитернĕшĕн ашшĕ-амăшĕ тÿлет иккен, сменăна – 1107 тенкĕ.

– Манăн шухăшăмпа, ачасен кăмăлне тивĕçтерессишĕн лагерьсем аван тăрăшаççĕ. Хамăр ÿснĕ вăхăтрипе паянхи çул çитмен граждансен пурнăçне танлаштарма май та çук. 5-мĕш класранпа вырăнти хуçалăх ĕç-хĕлне хастар хутшăннă, кану çинчен ĕмĕтленмелли çеç юлатчĕ. Çакăншăн пĕртте ÿкĕнместĕп – кăмăл-туйăм çирĕплĕхĕ çавăн чухне туптаннă ĕнтĕ, – палăртрĕ Михаил Васильевич ачасене вĕренÿ çулĕ пуçланиччен вăхăта кăсăклă та усăллă иртерме сунса.

■ Ирина ПУШКИНА

### Хурланатпăр...



Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствипе республикăри Журналистсен пĕрлĕхĕ Раççей патшалăх телерадиокомпанийĕн журналисчĕ Игорь Корнелюк Украинăра сарăмсăр вилнĕ пирки ВГТРК коллективĕпе, унăн çывăх çыннисемпе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

Çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче Луганск хули çывăхĕнчи Металлист поселокне минометсенчен персе тăнă вăхăтра телеушкăн унта ĕçленĕ. Игорь Корнелюк, йывăр сурансланнăскер, операци сĕтелĕ çинчех вилнĕ. Антон Волошин сасă операторĕн шăпи уçăмлă мар-ха. Виктор Денисов оператор чĕрĕ юлнă.

Украинăри Запорожье хулинче çуралнă Игорь Корнелюкăн пурнăçĕ 37 çулта татăлнă. Вăл 1998 çултанпа Ямал ГТРКра ятарлă, аслă корреспондентра, ача-пăча программисен ертÿçинче ĕçленĕ. 2005 çултанпа – информаци программисен службин ертÿçин çумĕ, ВГТРКан Мурманскри корпункчĕн ертÿçи. Кăçалхи çĕртмен 1-мĕшĕнче – Украинăра командировкăра пулнă. Мăшăрĕ, 7 çулти хĕрĕ тăлăха юлнă.

**КУН хыççăн КУН**

☎56-04-26

### Куравра – парламент кун-çулĕ

***Çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул çитет. Ăна халалласа ЧР Наци музейĕнче ятарлă курав уçăлнă.***

Унта тĕрлĕ сăн ÿкерчĕкпе документсем вырăн тупнă. Вĕсенче – Патшалăх Канашĕн паянхи ĕçĕ-хĕлĕ, депутатсем, саккунçăсен йышĕнчи паллă çыннисем, Чăваш Енре парламент юхăмĕ аталанма тытăннин историйĕ, революцичченхи тата совет тапхăрĕнчи кун-çулĕ, Раççей империйĕн Патшалăх Думинчи пирĕн республика представителĕсем тата ытти те. Пĕлме: 20 çул хушшинче Патшалăх Канашĕнче 240 депутат ĕçленĕ, вĕсенчен чылайăшĕ çак чыса темиçе хут та тивĕçнĕ. 1994 çултанпа 1131 саккун хатĕрлесе йышăннă.

**А.МИХЕЕВ.**

### «Çамрăк чух ташла!»

***Çак ятпа Çĕмĕрле тăрăхĕнчи культурăпа кану паркĕнче Раççей кунне халалласа ташлама юратакансен марафонĕ иртнĕ.***

Хулари «Восход» культура керменĕ йĕркеленĕ мероприятире пултарулăх коллективĕсемпе шкул ачисем хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Ташă уявне хула администрацийĕпе организаци-предприяти ĕçченĕсем те хутшăннă. Ташăçăсене вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ Лариса Осипова саламланă, яланах хастар та тăрăшуллă пулма суннă. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ библиотека умĕнчи лапамра та ташă флешмобĕ иртнĕ. «Ташлакан хула» проект хастарĕсем – «Огоньки» клуба çÿрекенсемпе «Палан» микрорайон ачисем – куракансене илемлĕ ташăсемпе савăнтарнă. Çамрăк артистсем çавăн пекех викторинăсемпе тĕрлĕ конкурсра хăйсен тавра курăмне тĕрĕсленĕ, вулавăшра уяв кунĕ тĕлне хатĕрленĕ куравпа паллашнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Пирĕн ентеш – виççĕмĕш

***Чăваш Ен пики Ксения Кузьмина Пĕтĕм Раççейри кулинари ăстисен олимпиадинчен çитĕнÿпе таврăннă.***

Йошкар-Олара иртнĕ конкурсра 32 регион поварĕсемпе кондитерĕсем тупăшнă. Чăваш Республикин чысне Шупашкарти апат-çимĕç технологийĕпе коммерци техникумĕн студентки Ксения Кузьмина хÿтĕленĕ. Конкурсра пирĕн ентеш наци апат-çимĕçне янтăланă, «Чăваш çĕрĕ çинче хăнасене яланах тарават» ятлăскер жюри членĕсене уйрăмах килĕшнĕ. Хăйне евĕрлĕ апат-çимĕç тутаннисĕр пуçне специалистсем студенткăн пĕлĕвне тĕрĕсленĕ тата сĕтеле илемлетес ăсталăхне пысăк хак панă. Кулинари ăстисен олимпиадин пĕтĕмлетĕвĕ те савăнтарать: Шупашкар хĕрĕ – виççĕмĕш вырăнта. Палăртмалла: пулас повар-кондитер кăçал республикăри професси маçтăрĕсен конкурсĕнче çĕнтерсе Раççейри тапхăрне хутшăнма путевка çĕнсе илнĕ.

**О.МАСЛОВ.**

### Премьер-министр патне – йышăнăва

Çĕртме уйăхĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕ Иван Моторин граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнĕ. Йышăнăва ĕç кунĕсенче 9.00-17.00 сехетсенче 64-20-04 номерпе /доб.6004/ шăнкăравласа çырăнма пулать.

**Çанталăк çинчен**

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çăвать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, çĕрле 9 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 744 мм, сывлăшри нÿрĕк 75 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 39 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 15, çĕрле 8 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 744 мм, сывлăшри нÿрĕк 51 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 39 минут.**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



## ÇĔКЛЕНЕÇÇĔ, ÇĔНЕЛЕÇÇĔ СПОРТ КЕРМЕНĔСЕМ

**Юлашки çулсенче Чăваш Енре спорт инфратытăмне аталантарас тĕллевпе пысăк ĕçсем пурнăçлаççĕ. Епле-ха хĕпĕртемĕн: республикăра çултан çул чаплă керменсем çĕкленеççĕ-çке. Акă 2005-2012 çулсенче кашни районхулара физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ, паянхи кун вĕсем – район центрĕсенче пурăнакансемшĕн чи юратнă вырăн. Вĕсен йышĕ татах ÿсмелле: çывăх çулсенче Шупашкарта тепĕр икĕ кермен çĕкленĕ. Тĕрлĕ хулапа салара катоксем, хоккей лапамĕсем, бассейнсем туса лартрĕç. Çывăх çулсенче Шупашкарта велоспорт-маунтинбайк центрĕ хута кайĕ, «Олимпийский» стадиона тата Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен 4-мĕш спорт шкулне çĕнетсе улăштарĕç.**

**Хĕллехи сезон тĕлнех Чăваш Енре икĕ Пăр кермен уçăлмалла: пĕри – Вăрнарта, тепри – Шупашкарта. Нумаях пулмасть тĕп хуларинчине республика Пуçлăхĕ те кайса курчĕ. Керменте икĕ каток, çавăнпа унта спортсменсене тренировка иртерме те, тĕрлĕ ăмăрту йĕркелеме те, хăнасене йышăнма та услови çителĕклех пулĕ, хула çыннисене конькипе ярăнма та вырăн çитĕ. «Паллă спортсменсене çитĕнтерме нумай функциллĕ центрсем кирлĕ. Унта ăсталăха туптакан спортсменсем малашлăхра Олимп вăййисенче палăрасса шанатпăр. Чăваш Ен ят-сумне çÿле çĕклекен фигуристсем, хоккеистсем, биатлонçăсем тухасса кĕтетпĕр», – тенĕччĕ республика Пуçлăхĕ объектпа паллашнă хыççăн. Ун чухне Михаил Игнатьев «Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕнче çĕкленекен маунтинбайк центрне те тĕрĕслерĕ. Строительство ĕçĕсене 2015 çулта Республика кунĕ тĕлне вĕçлемелле. Велосипед трасси, уçăлса çÿремелли вырăнсем, велодром – пулас центрăн чи пĕлтерĕшлĕ объекчĕсем. Ку тăрăхра пурăнакансем валли ытти район-хулари физкультурăпа спорт комплексĕсенчи пекех сывлăха çирĕплетме майсем туса парĕç. Велосипедпа туслисем валли – уйрăмах пысăк парне.**

**Кăçал Раççей Правительстви «Раççей Федерацийĕнче 2016-2020 çулсенче физкультурăпа спорта аталантарасси çинчен» федерацин тĕллевлĕ программин концепцине çирĕплетнĕ. Ăна пурнăçлама 97 млрд тенкĕ /73,98 млрд – патшалăх укçи, 18,9 – регионсен бюджечĕсенчен, 4,5 – хушма çăл куçсенчен/ уйăрĕç. Программăпа килĕшÿллĕн Раççейре спортăн 352 объектне тума палăртнă. Çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисене Олимп тата Паралимп вăййисене хатĕрленмешкĕн вĕренÿпе тренировка центрĕсем ĕçлеме тытăнĕç. Çавăн пекех федераци шайĕнчи 5 база хута кайĕ. Унпа килĕшÿллĕн Шупашкарта çывăх çулсенче биатлонçăсене тата ухăçăсене хатĕрлекен центрсем уçма палăртнă.**

**Çулталăк пуçламăшĕнче РФ Правительстви футбол уйĕсене çĕнетмешкĕн субсиди уйăрасси çинчен йышăну кăларнă: çĕр-шыври ачасемпе çамрăксен 200 спорт шкулне искуственнăлла майпа тунă лапамсемпе тивĕçтермелле. Укçа-тенке çĕр-шыври 35 субъекта уйăрса парĕç, çак йыша Чăваш Ен те кĕнĕ. ЧР Физкультурăпа спорт министерстви пĕлтернĕ тăрăх – субсидие Вăрнарти «Химик» стадионти футбол уйне çĕнетмешкĕн усă курĕç. Палăртмалла: икĕ çул каялла Çĕмĕрлепе Йĕпреç футболисчĕсене çĕнĕ уйсемпе савăнтарчĕç.**

**РФ Президенчĕ Владимир Путин вăтам шкулсен стадионĕсене çĕнетесси пирки сăмах пуçарнăччĕ. Телее, сăмаха çилпе вĕçтермерĕ: РФ Правительствин йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн кăçал регионсенчи /çав йыша Шупашкарти пĕр вăтам шкула та кĕртнĕ/ вĕренÿ учрежденийĕсен стадионĕсене юсамашкăн федераци бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрнă. Çак ĕçе тума пуçлайман пулин те пурнăçланасса шанатпăр. Анчах темшĕн ял-сала ачисене айккинче тăратса хăвараççĕ. Спортпа туслисем валли футбол уйĕсем тумаççĕ, çĕнĕ керменсем... çĕклемеççĕ. Пултаруллă та хастар çынсем /ытларах чухне çак йышра – физкультура вĕрентекенĕсемпе спорта чунтан парăннисем/ тăрăшнипе кăна тытăнса тăрать ял спорчĕ. Вĕсем ача-пăчапа çамрăксем спортпа туслă пулччăр тесе чылай вăй хураççĕ. Çапах ырă тĕслĕх те çук мар. Кăçал, тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи Кунер шкулĕнчен вĕренсе тухнисем шкул ачисене хоккей лапамне çĕнетсе панă. Халĕ çамрăк хоккеистсем хăйсене чемпионсем пекех туяççĕ пулĕ: вĕсем ятарлă каток çине тухаççĕ-çке. Çакнашкал тĕслĕх ытларах пулсан пысăк çитĕнÿсемпе палăракан спортсменсем йышлăрах пулĕччĕç-и тен.**

**Çав вăхăтрах тепĕр ыйту пăшăрхантарать: ялсенче ача йышĕ çултан çул чакать. Çавăнпах пулĕ футбол уйĕсем валли уйăрнă лапамсене симĕс курăк пусса илнĕ, хăш-пĕр шкул стадионĕсенче ача сасси илтĕнмест. Иртнĕ ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче пĕр вырăнтах пионерболла, волейболла, футболла вылятчĕç. Халĕ хушăран уй тăрăх мечĕк тапса çÿрекенсене кăна куркалатăн. Хĕллехи сивĕ кунсенче пĕве çинче каток йĕркелетчĕç, хоккейла вылятчĕç, хăшĕ-пĕри хăра-хăра коньки çине тăратчĕ – паян пĕвесене те çÿп-çаппа тултарчĕç, каток «тĕсне» те манчĕç. Шел те, паянхи кун ашшĕ-амăшĕ те, ял çыннисем те, ял тăрăхĕн администрацийĕсен ĕçченĕсем те çак çитменлĕхсене курмаççĕ, ача-пăча ырă-сывă ÿстĕр тесе тăрăшмаççĕ. Хăйсен шăпăрланĕсем валли спорт хатĕрĕсем туянма, ятарлă вырăнсем тума васкамаççĕ.**

■ Андрей МИХАЙЛОВ


● *Тема тăсăмĕ* ➡ 3 стр.

*Çын тата саккун*

# Параканран... илмен,

## е Коррупци никĕсĕ çирĕппинче пирĕн тӳпе те çук мар-и?

***Руль умĕнчи çынсенчен чылайăшĕ, мĕн пытармалли, патшалăх автоинспекцийĕн сотрудникĕсене килĕштерсех каймасть. Пурте мар – çул çинче йĕркелĕхе, çул-йĕр правилисене пăхăнакансен инспекторпа нимĕн пайламалли те çук. Кам пăхăнмасть, çăмăлттайланса хăйĕн тата çул çӳреве хутшăнакан ытти çыннăн пурнăçне-сывлăхне хăрушлăха кĕртсе ӳкерет – ытларах чухне вĕсем кăмăлсăрланаççĕ: штраф, яваплăхăн ытти мери – инспектор япăх пулса тăчĕ те. Паллах, пакунлă çынсенчен хăшĕ-пĕри яміттине хапсăнса взятка илни те пулкалать. Параканран илме хушнă-ха та… Анекдотсем ăнсăртран çуралман. Анчах хайхи анекдотсенче темшĕн-çке «взятка» ăнлавра икĕ ен пулнин киревсĕрлĕхĕ сăнланмасть – илекенни тата… параканни. ПАИ сотрудникĕсемпе çыхăннă тĕслĕхсенче параканни хăйĕн айăпне курмăш-асăрхамăш тăвас тĕллевпе преступлени çулĕ çине тăни асра та çук. Çапла, илни кăна мар, взятка пани те – преступлени.***



– Взятка сĕнни-панине Уголовлă кодексăн 291 статйи уçăмлă хаклать, – тет ЧР ШĔМĕн Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн управленийĕн тĕрĕслевпе профилактика уйрăмĕн пуçлăхĕ полици подполковникĕ Вячеслав Жирнов. – Яваплăх та çирĕп: уйрăмах пысăк виçепе взятка панăшăн 12 çул таран ирĕклĕхсĕр хăварма, взяткăн 90 виçи чухлĕ штрафлама пултараççĕ. Анчах хăшĕсене çакă та хăратмасть: ПАИ сотрудникĕсене укçа панă тĕслĕхсен шучĕ чакма мар, пачах тепĕр майлă – ӳссе пырать. Пĕлтĕрхи кăрлач-çу уйăхĕсенче эпир çавнашкал 4 тĕслĕхе кăна шута илнĕччĕ, кăçал вара икĕ хутран та ытларах – 9 уголовлă ĕç пуçарнă.

Паллах, çул çинчи инспекторсене взятка «пысăк виçепе» сĕнмеççĕ, анчах ку – каçармалли сăлтав мар. Хăш-пĕр уголовлă ĕçпе приговор та паллă ĕнтĕ – суд тенкелĕ çине ларнисем ӳкĕнеççĕ те пуль. Анчах чавса çывăх та...

Шупашкарта пурăнакан Александр Гаврилова çав кун, кăçалхи нарăсăн 6-мĕшĕнче, Канаш районĕнчи Маяк патĕнче ПАИ инспекторĕсем чарнă. Сăлтавсăр мар: Гаврилов тытса пыракан «Шкода» автомобиль юраман çĕрте çулăн транспорт хирĕç килекен енне тухнă. Урăхла каласан çул-йĕр правилисене сĕмсĕррĕн пăснă. С.Шамбулин инспектор протокол çырмашкăн ăна служба машинин салонне кĕрсе ларма сĕннĕ. Айăплă водитель вара яваплăхран пăрăнас тĕллевпе инспектора взятка пама тăнă. Служба автомобилĕн малти ларкăчĕсен хушшине 2000 тенкĕ хунă. Ан тĕлĕнĕр: Шамбулин çав укçана илмен.

Уголовлă ĕç çуралнă. Халĕ приговор та паллă ĕнтĕ. Канаш районĕн сучĕ А.Гаврилова должноçри çынна взятка пама тăнăшăн хайхи укçан 30 виçи – 60 пин тенкĕлĕх – штрафланă. Сăмах май, водитель преступлени çулĕ çине тăман тăк çул-йĕр правилисене пăснăшăн административлă яваплăх чылай «йӳнĕрех» пулатчĕ – 5 пин тенкĕлĕх штраф. Чăн та, водитель удостоверенине 4-6 уйăхлăха туртса илме пултаратчĕç. Халĕ вара – суд айăплавĕ, яланлăхах вараланнă ят-сум.

Нарăсăн 22-мĕшĕнче Шупашкарти Ленин проспектĕнчи 52-мĕш çурт патĕнче инспекторсем «Мицубиси» автомобиле чарнă. Руль умĕнчи Дмитрий Ж. транспорт хатĕрĕн регистраци номерĕ курăнманнине пăхмасăр çула тухнă та – йĕркелĕх хуралçисене çакă сисчĕвлентернĕ. Тĕрĕсленĕ май Вăрнар çамрăкĕн хушамачĕ автомобилĕн ОСАГО полисĕнче çукки палăрнă – капла юрамасть! 24 çулти çамрăк аслă лейтенанта Е.Карсакова взятка сĕнсе хăтăлма шухăш тытнă – служба автомобилĕн бардачокне 700 тенкĕ хунă. Инспектор кун пирки тивĕçлĕ службăна пĕлтернĕ май взятка паракана çавăнтах тытса чарнă. Кăтартăвĕ – уголовлă ĕç.

Акă ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн ДПС батальонĕн инспекторĕн С.Мельниковăн рапортĕнчи йĕркесем: «Пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче службăна тăтăм. Çав кунах пире пуçлăхсем экономикăри преступленисемпе тата коррупципе кĕрешекен пай сотрудникĕсемпе пĕрле ПАИ сотрудникĕсене взятка парассине хирĕç оперативлă профилактика мероприятийĕсене хутшăнма хушрĕç. 13 сехет хыççăн Б.Хмельницкий урамĕнчи 113-мĕш çурт патĕнче ВАЗ автомобиль çул урлă каçакан çуран çынна ирттерсе яманнине асăрхарăмăр. Манăн ĕçтеш Ю.Клементьев çав машинăна чарчĕ, водительтен документ ыйтрĕ. Водитель хутсене пачĕ. Унăн хушамачĕ ОСАГО полисĕнче çукки палăрчĕ, автотранспорт хатĕрĕн техника паспорчĕ те çук. Водитель служба машинине ларчĕ, эпĕ адмпротокол çырма пуçларăм. Кăштахран водитель протокол ан çыр тесе мана 1000 тенкĕ сĕнчĕ. Эпĕ хирĕçлерĕм, çакна должноçри çынна взятка пани тесе хаклама пултарасси пирки асăрхаттартăм. Вăл çакна пĕлет иккен, хăй те маларах тепĕр çын ПАИ сотрудникне взятка панă тĕслĕхре пунетей пулса хутшăннă, апла пулин те малти ларкăчсен хушшине купюрăсем хучĕ – 1000 тенкĕ...»

Инспектор çакăн хыççăн служба машинин тĕрлĕ тĕспе çутатакан маячокне хута янă та – взятка паракана коррупципе кĕрешекен пай сотрудникĕсем аларанах ярса тытнă.

Çав кунах Муркаш районĕнче те çакнашкал пăтăрмах пулнă. Унта çĕр улми тиенĕ грузовик водителĕ Косимджон Ж. 500 тенкĕлĕх штрафран хăтăлас шутпа выранти автоинспекторсене 200 тенкĕ сĕннĕ. Çак тĕслĕхпе те Следстви комитечĕн Етĕрнери пайĕ уголовлă ĕç пуçарнă.

Сăмах май, пуш уйăхĕ темшĕн-çке кунашкал тĕслĕхсемпе уйрăмах пуян пулнă. Уйăхăн 14-мĕш кунĕнче Шупашкарти Энтузиастсен урамĕнче те «Опель» автомобильпе çула тухнă Г. çуран çынна ирттерсе яманнине кура ăна ПАИ сотрудникĕсем чарнă. Арçын А.Романов инспектора 1000 тенкĕ тыттарнă – взятка. Каллех – уголовлă ĕç.

Элĕкре пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче П. çакланнă. Унăн ОСАГО полисĕн вăхăчĕ иртнĕ – айăпĕ куç кĕрет. Çакскер 150 тенкĕ тӳлесе тӳрре тухма тăнă. Куншăн та суд умне тăма тивет. Йĕпреç районĕнче те водитель инспектор хăйĕн айăпне курмăш тăвассине ытла та йӳнĕ хакланă: чĕр чунсен карантинĕн правилисене пăснăшăн явап тыттарасран хăтăлас шутпа И. водитель А.Чуркин лейтенанта 300 тенкĕ сĕннĕ. Пакунлă çын укçана илмен. Çак тĕслĕхпе те Уголовлă кодексăн 30 статйин 3-мĕш, 291 статйин 3-мĕш пайĕсемпе уголовлă ĕç пуçарнă.

Пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче Канаш хулинче Раис А. çулйĕр инспекторне укçа илме «ӳкĕтленĕ». Вăл регистраци номерĕсĕр транспорт хатĕрĕпе çула тухнă. Çакăншăн хăйне чарсан В.Анисимов инспектор служба машининче протокол çырнă вăхăтра ăна 1000 тенкĕ парасшăн пулнă. Уголовлă ĕçе Следстви комитечĕн Канашри пайĕ тĕпчет.

Тепĕр рапорт – ăна ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕн ДПС батальонĕн инспекторĕ Д.Андреев çырнă: «Ака уйăхĕн 11-мĕшĕнче 12 сехет тĕлнелле Б.Хмельницкий урамĕнче ВАЗ автомашина водителĕ хăрушсăрлăх пиçиххипе çыхăнманнине асăрхарăмăр. Ăна чартăмăр. Руль умĕнче – Мари Эл çынни Велихан М. Адмпротокол çырнă вăхăтра М. мана протокол ан çыр тесе 500 тенкĕ сĕнчĕ. Куншăн УК 291 статйипе айăплама пултарасси пирки асăрхаттартăм пулин те вăл машинăна алă тормозĕн рычагĕ патне 50, 100 тенкĕлĕх купюрăсем хучĕ – пĕтĕмпе 500 тенкĕ...» Арçынна çавăнтах тытса чарнă.

...Юрĕ, пăнчă лартма та вăхăт. Асăрхаттармалли çеç юлать: çул çинче инспектор чарчĕ тĕк – яваплăхран хăтăлас шутпа кĕсьерен енчĕк кăлариччен «çиччĕ виçме» ан манăр. Пĕлсе пĕтер: укçа сĕнĕн те – инспектор илмĕ, хăвăршăнах ытла та хакла ларĕ. Пакунлă çынсен шалăвĕ паян пĕчĕк теейĕмĕн, çавăнпа та вĕсем ĕç вырăнĕсĕр юлассинчен, карьерăна такăнтарассинчен тата, чи хăрушши, суд тенкелĕ çине ларассинчен шикленмесĕр сирĕн темиçе çĕр тенкĕре хапсăнасси иккĕленӳллĕ. Çавăнпах право хуралĕнчи органсенче коррупци тымар яни пирки сăмах вакланкансене те ӳпкелес килет: параканни пулсан илекенни тупăнасси часах – çакна та шута илесчĕ. Паратпăр тăк – хамăрах коррупци никĕсне çирĕплететпĕр мар-и?

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Пресс-конференци*

# Пĕр-пĕрне ăнланни пĕлтерĕшлĕ

***Чăваш Ен ертӳлĕхĕ, Правительство членĕсем Республика кунне хатĕрленес ыйтусемпе малалла ĕçлеççĕ. ЧР экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин Правительство çуртĕнче журналистсемпе пресс-конференци ирттерчĕ.***

Çĕртме уйăхĕн 19-20-мĕшĕсенче Шупашкарта – VII «Раççей регионĕсем – пĕр тикĕс аталану» экономика форумĕ, Оперăпа балет театрĕнче пленарлă лару иртет. «Республика уявне килекенсем пире тивĕçлипе хаклама пултарччăр, ĕненччĕр, шанччăр тесен хамăрăн наци рейтингне туса хумалла. Ытти регион валли тĕслĕх пулар, таварпа тĕнчене тухма пултарар, – терĕ Владимир Александрович. – Журналистсем тĕл пулусенче форум мĕн чухлĕ тупăш кӳни çинчен ыйтма юратаççĕ, анчах пирĕншĕн унăн тупăшĕ мар, пĕр-пĕрне ăнланни, хăнасемпе килĕшӳсем туни, куçа-куçăн калаçни пĕлтерĕшлĕ».

Çак кунсенче «Хĕвел» завода хута ямалла. Оборудование вырнаçтарса пĕтересси çеç юлнă.

Экономика форумĕнче «çавра сĕтелсем» ĕçлеççĕ, вĕсене энергетика, промышленноç, ытти министерство представителĕсем хутшăнаççĕ. Беларуçпа Францирен, Швейцарипе Японирен, ытти çĕр-шывран, Раççей Федерацийĕн 24 субъектĕнчен 1000 ытла хăна килет.

Çĕртме уйăхĕн 18-22-мĕшĕсенче регионсен хушшинчи XXI «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» курав ĕçлет. Уява пухăннисем республика туса кăларакан çĕнĕ таварпа паллашĕç. Пĕчĕк тата вăтам бизнесăн продукцийĕ те вырăн тупĕ.

Çĕртмен 23-24-мĕшĕсенче «Тăван культура çути» ятпа фейерверксен фестивалĕ кӳлмек хĕрринче пулать. Сергиев Посад, Челябинск хулисенчен, Беларуç Республикинчен, Шупашкартан «Пиро-Росс», «Фейерверк», «Кальвин», «ПИРОСНАБ-Поволжье» тулли мар яваплă обществăсен тата Симферопольтен /Крым Республики/ «Корсар» компанийĕн командисем хутшăнаççĕ. Пĕлтĕр «Кальвин» ООО çĕнтернĕччĕ, Гран-прие тивĕçнĕччĕ.

Ятарлă жюри пулмĕ. Кам епле тупăшнине куракансем алă çупса хаклĕç.

Владимир Аврелькин Китай делегацийĕ те хутшăнасса пĕлтерчĕ. Пĕрлехи проектсем пуррине, уйрăмах ял хуçалăх çимĕçне тирпейлес енĕпе стратеги партнерĕ пулнине палăртрĕ.

Китай таварне халăх тиркесе туянатчĕ. Кӳршĕллĕ çĕр-шыв халĕ пахалăхшăн питĕ тăрăшать. Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе те, Индипе те экспорт енĕпе çыхăнăва вăйлатмалла.

Владимир Александрович МИХ представителĕсен йышлă ыйтăвне хуравларĕ.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн УКАЗĔ*

### Чăваш Республикин 2015 çулхи тата планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи тапхăрти бюджет политикин тĕп çул-йĕрĕсем çинчен

Чăваш Республикин Конституцийĕн 73 статйине тĕпе хурса **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин 2015 çулхи тата планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи тапхăрти бюджет политикин тĕп çулйĕрĕсем çаксем пулнине палăртас:

Чăваш Республикин бюджет тытăмĕн вăрах вăхăтлăх шайлашулăхне тата финанс çирĕплĕхне тивĕçтересси, çав шутра патшалăх политикин тĕллевĕсене пурнăçлама уйăрма пултаракан финанс ресурсĕсен калăпăшне вăрах вăхăтлăха çирĕплетме май паракан Чăваш Республикин вăрах вăхăтлăх бюджет стратегине палăртса;

Чăваш Республикин патшалăх программисене пурнăçламалли майсен шанчăклăхне тата пурлăхпа тивĕçтерессине ӳстересси, вĕсен Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн вăрах вăхăтлăх тĕллевĕсене пурнăçламалли çул-йĕрне палăртасси; Чăваш Республикин республика бюджечĕн тухăççăр тăкакĕсене чакарма май паракан Чăваш Республикин патшалăх программисен ĕçĕсене пурнăçласа пынин тухăçлăхне тăтăшах тишкерсе тăрасси;

çĕнĕ предприятисем уçма тата инфратытăма аталантарма хăтлă майсем тăвасси; инвестицисем хывассине, чăн малтанах вĕсене промышленноçа технологи тĕлĕшĕнчен модернизацилес тата çĕнетес тĕллевпе хывассине хавхалантарасси; инвестици проекчĕсене суйласа илес ĕçе лайăхлатасси; инвестици проекчĕсен проектпа смета документацине туса хатĕрлес, вĕсене сăлтавлас, хак парас тата пурнăçланине тĕрĕслесе тăрас ĕçсен пахалăхне ӳстересси;

Чăваш Республикин республика бюджечĕн тупăш вăйхăватне тата унăн хăйĕн тупăшĕсен шайĕ ӳсессине тивĕçтересси, çав шутра физически сăпатсемшĕн куçман пурлăхран илекен налук, организацисемшĕн кадастр хакне тĕпе хурса уйрăм куçман пурлăх объекчĕсем тĕлĕшпе пурлăхран илекен налук кĕртессине тивĕçтерес ĕçе тĕллевлĕн пурнăçлани, Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсем тата федерацин ĕç тăвакан органĕсен территорири тивĕçлĕ органĕсем пĕр-пĕрин хушшинче информаци тĕлĕшĕнчен çыхăнса ĕçлессин пахалăхне лайăхлатни шучĕпе пурлăхран илекен налуксем тăрăх налук хумалли базăна анлăлатасси;

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи указĕсенче палăртнă çул-йĕрсемпе тĕллевсен шайĕнче илнĕ бюджет обязательствисене ним иккĕленмесĕр пурнăçлама пулăшакан яваплă бюджет политикине тытса пырасси; кредит парăмĕ ӳсессине тата Чăваш Республикин республика бюджечĕн парса татман парăмĕсем пулма пултарассине пӳлесси;

бюджет тăкакĕсене вырăнлăрах тумалли ĕçсене малалла пурнăçласси, çав шутра Чăваш Республикин патшалăх служащийĕсен йышне чакарни, халăх ыйтнине тивĕçтерме палăртакан хальхи йышши компактлă аппарат туса хурса халăха патшалăх паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатни шучĕпе; социаллă сферăра патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхĕн майĕсене ĕçе кĕртесси; Чăваш Республикинче пурăнакан халăха адреслăх тата кирлĕлĕх принципĕсене тĕпе хурса патшалăх гарантийĕ тата социаллă пулăшу памалли майсене лайăхлатасси;

хаксем сăлтавсăр ӳссе пырассине тата тӳрĕ мар кăмăллă ĕç тăвакансемпе контрактсем тăвасран асăрхаттарас тĕллевпе Чăваш Республикин нушисене тивĕçтерме таварсем, ĕçсем, пулăшу ĕçĕсем туянассин тухăçлăхне ӳстересси;

бюджетсен хушшинчи çыхăнусене малалла лайăхлатасси, вырăнти бюджетсен харпăр хăйĕн тупăш базине ӳстерсе пымалли майсем тăвасси; Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен бюджетсен хушшинчи трансфертсене тĕллевлĕн уйăрса панин тухăçлăхне ӳстересси; Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен бюджетсен хушшинчи трансфертсене вырăнти бюджетсене муниципалитет пĕрлĕхĕсен тăкакĕсем тăрăх тăкак обязательствисене тӳлеме кирлĕ укçа-тенкĕ шайĕнче уйăрса парасси çине тапхăрăн-тапхăрăн куçасси;

парăмăн хăрушсăр виçин шайне сыхласа хăварасси; тупăшсен шанчăклă çăл куçĕсемпе тивĕçтермен çĕнĕ тăкаксем тума чарасси; Чăваш Республикин хальхи кредит рейтингĕн шайне малашне тата ӳстерме палăртса тытса пырасси;

бюджета пурнăçланă чухне Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсенче ирттерекен шалти финанс тĕрĕслевĕн тата шалти финанс аудичĕн пĕлтерĕшне укçа-тенкĕ куçăмне тĕрĕслесе тăнинчен унпа усă курнипе пулакан результатсене тĕрĕслесси çине куçмалли майпа пысăклатасси;

патшалăх укçи-тенкин уççăнлăхне тата усăлăхне ӳстересси, Чăваш Республикин республика бюджечĕ йĕркеленсе пыни тата ăна пурнăçлани, Чăваш Республикин патшалăх программисене пурнăçлани çинчен калакан информацие граждансене чăн вăхăт режимĕнче усă курмалли майсемпе тивĕçтерес ĕçе лайăхлатасси.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн тата Чăваш Республикин бюджет политикин хальхи çул-йĕрĕсене шута илсе Чăваш Республикин республика бюджечĕн проектне тата Чăваш Республикин 2015 çулхи тата планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи тапхăрти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн прогнозне хатĕрлессине йĕркелемелле.

3. Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене муниципалитет пĕрлĕхĕсен бюджет политикине палăртнă чухне Чăваш Республикин 2015 çулхи тата планпа пăхнă 2016 тата 2017 çулсенчи тапхăрти бюджет политикин тĕп çул-йĕрĕсене шута илме сĕнес.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, çĕртме, 11, 84 №.

*Аталану çулĕпе*

# «Килĕр, туянăр...»

***Етĕрне тăрăхĕнче кооспераци юхăмĕ XIX-XX ĕмĕрсен чиккинче аталанма пуçланă. Хусан кĕпĕрнине кĕнĕ Етĕрне уесĕнче чи малтан 1911 çулта Палтай ялĕнче пĕрлĕх чăмăртаннă, уес центрĕнче – 1913 çулта. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи хыççăн ытти ялта та потребительсен пĕрлĕхĕсене йĕркелеççĕ.***

Совет саманинче вак тытăмсене пĕрлештерме тытăнаççĕ. Сăр хĕрринчи ялсем Етĕрне райповне йĕркелеççĕ, Выл юхан шывĕн икĕ çыранĕпе вырнаçнисем – Советски райповне. 1998 çулта вара вĕсем те пĕрлешсе пĕр хăватлă организацире ĕçлеме килĕшсе татăлаççĕ.

Экономика хăвачĕпе паян Етĕрне райповĕ республикăра чи вăйлисен шутĕнче. Хастар коллектив хуçалăх ĕçне пĕлсе туса пынине, ялти суту-илĕве çĕнĕ шая çĕкленине Раççей Федерацийĕнчи потребительсен обществисен ăмăртăвĕсенче çĕнсе илнĕ наградăсем аван çирĕплетеççĕ. Чăвашпотребсоюз ертӳçисем те вĕсене яланах тĕслĕхе хураççĕ.

– Ытла мухтаса ан çырăр, ытти районсенче те ырри çук мар, вĕсен паха опытне те тишкеретпĕр, – çапла сăпайлăналарĕ райпо правленийĕн председателĕ, РФ суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, район депутачĕсен Пухăвĕн ертӳçи Александр Краснов. – Кашни çын хăйĕн вырăнĕнче яваплăха туйса ĕçлесен ӳсĕм пулатех. Эпĕ хамăр çынсенчен çирĕп ыйтни хăшне-пĕрне килĕшмест пулĕ. Унсăрăн май килмест. Лавккана кĕретĕн-и е столовăйра апатланатăн – пур çĕрте те хăтлăх, тирпейлĕхпе йĕркелĕх хуçалантăр. Акă çу уйăхĕнче Пупăлькасси ял уявне ирттерчĕç, ун умĕн ял лавккине шал енчен те, тулашĕнчен те юсаса çĕнетрĕмĕр. Çак илеме курсан чун хĕпĕртетçке. Уява кун чухлĕ çын килнине ас тумаççĕ. Хăнасем ял лавккине те пăхса пахаларĕç, мĕн те пулин туянчĕçех. Сентре илĕртӳлĕхĕпе, сутуçăсен тараватлăхĕпе çын кăмăлне çавăртăмăр пулсан эпир хамăр тĕллеве чыслăн пурнăçлатпăр теме сăлтав пур.

Суту-илӳ вырăнĕсем хăйне евĕр культура центрĕсене аса илтереççĕ. Вĕсем – ял сăнсăпачĕ. Шăрăх çанталăкра урамра çын утни курăнмасть, лавкка патĕнче вара халăх пурах. Куллен кирлине туяннипе пĕрлех ял хыпарĕсене сӳтсе яваççĕ, тăванĕсемпе тĕл пулса калаçни мĕне тăрать!

Александр Андреевич пĕр цифра илсе кăтартрĕ. Юлашки вунă çулта ялти суту-илӳ тытăмне йĕркелесе çитерме 234 млн тенкĕ уйăрнă. Çуртсене тĕпрен юсанă е çĕнĕрен купаланă, газ, ăшă кĕртнĕ. Хуларинчен пĕртте кая мар-çке. Суту-илĕвĕн 105 тата общество апатланăвĕн 20 ытла предприятийĕ, çăкăр комбиначĕ, кулинари цехĕ, автобаза, çăнăх цехĕ, халăхран чĕр тавар йышăнакан 4 пункт, медицинăпа ветеринари аптекисем, пулă цехĕ – çак организацисенче 800 çынна яхăн тăрăшать.

Ваккăн суту-илӳ çаврăнăшĕнче апат-çимĕç продукчĕсен тӳпи – 67 процент. Çăкăр комбиначĕ 90 тĕрлĕ çимĕç пĕçерсе хатĕрлет. Тăварланă тата тĕтĕмленĕ пулăпа район халăхĕн ыйтăвне туллин тивĕçтерни çинчен пĕлтерчĕç. Паллах промышленноç таварĕсен çаврăнăшĕ те ӳснĕ. Çак çулсенче «Ача-пăча тĕнчи», «Хăтлăх», «Каруççель», «Етĕрне» суту-илӳ çурчĕсем хута кайнă. Самани хăвăрт улшăнса пырать те, ял çынни тӳлевсенче банк карточкисемпе е кредит майĕсемпе ытларах усă курма пуçларĕ. Кунсăр пуçне райпо таварсене йӳнетсе сĕнекен тĕрлĕ акци ирттерни те пулăшать.

Кулинари цехĕнче пире Надежда Петровна Климентова питĕ ăш пиллĕн йышăнчĕ:

– Пирĕн хĕрсем çав тери маттур та ĕçчен, – тет вăл. – Ирхи пиллĕкре ĕçе пуçăнаççĕ. Коллективра пурĕ 12-ĕн. Иванова, Данилова, Демидова, Матвеева, Ягодейкина, Рычажкова, Павлова... Эй, пурне те асăнмăп. Тутлă апат-çимĕç ăстисем. Эпĕ кунта 1987 çултанпа ĕçлетĕп. Костромари технологи техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн килтĕм. Етĕрне халăхĕ пирĕн продукцие питĕ килĕштерет. Камăн çуралнă кун е юбилей – маларах саккас параççĕ. Ывăлпа хĕр те сутуилӳ енĕпе кайрĕç. Валентина коопераци институтне ăнăçлă пĕтерчĕ.

«Встреча» кафене юсаса çĕнетнĕ хыççăн кунта харăсах 130 çын вырнаçать. Туй кĕрлет, çуралнă кун паллă тăваççĕ. Райпо общество апатланăвĕн предприятийĕсен пурлăх никĕсне çирĕплетес çул çине тăнă. Çăкăр комбиначĕн çĕнĕ линийĕсене ĕçе кĕртме пысăк укçа уйăрнă. Ку чухнехи оборудовани – чуста çăракан, печени пĕçерекен машинăсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме май параççĕ. Газпа ĕçлекен икĕ кăмакана хута янă.



• *Кулинари цехне ертсе пыракан Надежда Климентова.*

Халăхран чĕр тавар туянасси яланах тĕп вырăнта пулнă. «Пучах» тата «Выльский» хуçалăхсенче ирттернĕ тĕл пулусенче эпир сĕт пуçтарассине мĕнле йĕркеленипе кăсăклантăмăр. «Райпо машини куллен килет, укçапа вăхăтра татăлаççĕ. Икшер ĕне тытакансем уйăхне 10 пин ĕçлесе илеççĕ. Пирĕншĕн ку пысăк укçа», – терĕç çынсем. Техника паркĕ начар мар вĕсен. Автотранспорт шучĕ 40-рен иртнĕ. Кафесемпе лавккасене, шкулпа ача сачĕсене экологи енчен таса апат-çимĕç леçеççĕ.



*Реклама*

• *Райпо правленийĕн председателĕ Александр Краснов.*

Коллектив ăнăçлă ĕçлесе пырасси производство процесне вăхăт ыйтнă пек йĕркелесе çитерниченчен, кадрсен ăсталăхĕнчен килет-тĕр. Коопераци тытăмĕн техникумне е аслă шкулне вĕренме кĕрес текенсене яланах хапăл, вăй çитнĕ таран укçан пулăшаççĕ. Специалистсенчен чылайăшĕ – ку тăрăхра ӳссе çитĕннĕскерсем.

Хисеп хăми çинче – Алина Алексеева хатĕрлевçĕ, Юрий Иванов водитель, Элла Иванова, Эльвира Андреева, Полина Васильева лавкка заведующийĕсем, кафе ертӳçи Наталья Чугунова, Галина Данилова çăкăр пĕçерекен, кулинари цехĕн ертӳçи Надежда Климентова.

Спортри çитĕнӳсене те асăнмалла. Районти çăмăл атлетсен кросĕнче райпо команди /Снежанна Фадеева, Ольга Вашурова, Галина Кириллова, Людмила Семенова, Елена Сезяйкина, Александр Сидоров, Валентина Воробьева, Игорь Емельянов, Владимир Яковлев, Николай Родионов, Владимир Осокин/ мала тухнă. Наталья Горбунова вара Чăваш Енри потребкооперацире тăрăшакан пикесен конкурсĕнче ятарлă приза тивĕçнĕ.

■ **Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем



• *Тутлă çимĕç ăстисем.*

*Ĕçлев*

# «Вăрттăнни» ан пултăр

***Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи Ф.Кадырова пĕлтернĕ тăрăх – ĕçлевĕн вăрттăн рынокне легализацилес тĕллевпе райпрокуратура «хĕрӳ лини» телефонĕпе анлăн усă курать. 62-25-51 – çак телефонпа шăнкăравласа хăйĕн ĕç прависене пăсни çинчен кашниех пĕлтерме пултарать.***

Ку – прокуратура органĕсем ĕçлев саккунĕсене пăхăннине тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе пурнăçлакан ĕçĕн пĕр енĕ кăна. Прокуратура çак ыйтусемпе чăннипех тимлĕ. Кăçал ĕçшĕн вăхăтра тӳленипе кăсăкланса ирттернĕ прокурор тĕрĕслевĕсем тăрăх Чăваш Енри 9 предприяти ертӳçине должноçран хăтарнă.

Калăпăр, Вăрнар районĕнче «Агрохмель» ООО 33 ĕçчен умĕнче шалу тĕлĕшпе 250 пин ытла тенкĕлĕх парăма кĕнине çирĕплетнĕ. Предприяти ертӳçине кунашкаллишĕн маларах та административлă майпа явап тыттарнине кура ку хутĕнче суд ăна çулталăклăха дисквалификацилеме йышăннă.

Çакнашкаллишĕнех Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» хуçалăх председательне те дисквалификациленĕ, унта 64 çынна 400 пин тенкĕ ытла вăхăтра тӳлемен. Прокурор хушша кĕнĕ хыççăн парăма туллин татнă.

Çулталăк пуçланнăранпа вара республикăри хуласемпе районсен прокурорĕсем ĕçшĕн тӳлес енĕпе саккуна пăснин 2 пине яхăн тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă. Прокурорсен йышăнăвĕсем тăрăх должноçри 113 çынна тата юридици вăйĕнчи тытăма административлă майпа явап тыттарнă, çав шутра 9 ертӳçе дисквалификациленĕ, 2 уголовлă ĕç пуçарнă. Çак ĕç кăтартăвĕ курăмлă: пĕтĕмпе 20 млн ытла тенкĕлĕх парăма татнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**




*Юхăм*

# Хĕвеллĕ кустăрмасем велосипед çине ларма сĕнеççĕ

***«Велосипед – пирĕн чи çывăх тус», – теççĕ вĕсем. Çавăнпа çуран та, çăмăл машинăпа та мар, велосипедпа çӳреме чĕнеççĕ Чăваш Республикинчи «Хĕвеллĕ кустăрмасем» спорт юхăмĕн хастарĕсем. Мĕншĕн велосипед суйласа илнĕ вĕсем? Çак тата ытти ыйту çине общество организацийĕн ертӳçи Вячеслав ПЛАТОНОВ хуравларĕ.***



### *Кашни кун çӳремелли транспорт*

**– Вячеслав Яковлевич, республикăри велосипедçăсен юхăмĕ хăçан йĕркеленнĕ? Унăн ĕç-хĕлĕпе паллаштарсамăр.**

– 2004 çулхи çулла пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев космонавт вăхăтсăр вилчĕ. Çакă пирĕншĕн, ăна сума сăвакансемшĕн, унпа мухтанакансемшĕн, питĕ пысăк инкек пулчĕ. Ăна асăнса Çĕнĕ Шупашкарти спорт шкулĕн тренерĕпе, республикăри паллă велосипедçăпа Николай Никитинпа пĕрле Шуршăла çити велочупу йĕркелеме шухăшларăмăр, тепĕр ушкăнпа Атăл леш енне çитсе килтĕмĕр. Çав çулах Патăрьел хĕрĕ Ирина Калентьева Олимп вăййисене хутшăннине халалласа тепĕр чупу ирттертĕмĕр. Çак мероприятисем хыççăн спорт клубĕ /малтан вăл çакнашкал ятлăччĕ/ уçас терĕмĕр. 10 çул хушшинче унта çӳрекенсен тата чупусене хутшăнакансен йышĕ самай ӳсрĕ, çавна май темиçе çул каялла Чăваш Республикинчи «Хĕвеллĕ кустăрмасем» велоюхăм» общество организацийĕ йĕркелерĕмĕр.

**– Мĕншĕн юхăма «Хĕвеллĕ кустăрмасем» ят патăр?**

– Пире «Поющие гитары» ушкăн шăрантаракан «Велосипедçăсен юрри» хавахантарчĕ, унта «Солнце на спицах, синева над головой...» сăмахсенчен пуçланакан çаврăм пур. Çак юрă халĕ пирĕн гимн.

**– Велосипедçăсен çулталăк календарĕ те мероприятисенчен пуян пулĕ?**

– Пирĕн кашни çынна велосипедпа туслаштарас килет. Паянхи çăмăл мар лару-тăрура /çăмăл машинăсен йышĕ кунран кун ӳснине пурте пĕлетпĕр, çавна май çул çинче – «пăкăсем», çут çанталăк та вараланать/ вăл кашни кун çӳремелли транспорт пулмалла. Каннă чухне кăна мар, ĕçе те, хуларан яла çӳреме те питĕ меллĕ вăл. Çавăнпа пурне те велосипед çине ларма сĕнетĕп. Чăн та, эпир çулталăкне вун-вун мероприяти йĕркелетпĕр: ăмăрту, форум, ятарлă акци тата ытти те. Кашни çул ака уйăхĕнче сезон пуçланнине халалласа пысăк чупу ирттеретпĕр. Чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ мероприятисенчен пĕри вăл – Андриян Николаева халалланă чупу, кăçалхипе 11-мĕш хут иртекен старта çулсерен 500-600 çын хутшăнать. Кашни çул Çĕнтерӳ кунне халалласа «Çĕнĕ Шупашкар – Элĕк» маршрутпа çул çӳреве тухатпăр. Чупу вăхăтĕнчех музейсене кĕрсе куратпăр, куравсем йĕркелетпĕр, уява концертсемпе пуянлататпăр. Йывăç-тĕм лартас йăла та пур. Çĕр-шывĕпе иртекен массăллă чупу вăл – Олимп кунĕ. Çав кун пирĕн республикăра çĕр-çĕр çын велосипед çине ларать. Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕ те пирĕншĕн питĕ чаплă уяв: кашни çул тĕрлĕ район-хулана çитме тăрăшатпăр, çар тивĕçне пурнăçласа пуç хунă офицерсемпе салтаксене аса илетпĕр. Велосипедçăсен «Велокаç» фестивалĕ те чăн-чăн уява çаврăнать: тĕрлĕ регионта пурăнакан пин-пин çын /тимĕр урхамахлисем паллах/, кăçал калăпăр Хусана, пухăнать. Тепĕр çул ăна Шупашкарта ирттерес шухăш пур.

**– «Хĕвеллĕ кустăрмасен» йышĕнче чи пултаруллисемпе хастаррисем те сахал мар. Вĕсем çинчен каласа парсамăр.**

– Çапла, пирĕн йышра çамрăксем те, ветерансем те пур. Вĕсенчен чи сумли вăл – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă Михаил Чекменев. 9 теçеткерен иртнĕскер халĕ те велосипед çине ларма шикленмест. Темиçе çул каялла вăл юлташĕсемпе пĕрле вăрçă вăхăтĕнче утса тухнă вырăнсемпе 28 кун çул çӳревре пулнинчен халĕ те тĕлĕнме пăрахаймастпăр. Аслă ӳсĕмрисенчен тата Илья Федорова, Валентина Андреевăна палăртмалла. Александр Стебловский вара чăнчăн турист, ялан çул çинче. Çав вăхăтрах вăл пире гитарăпа кĕвĕ-юрă шăрантарса савăнтарать. Çĕнĕ Шупашкарти музей комплексĕн директорĕ Александр Ильин та велоюхăмăн хастарĕ, вăл пире тĕрлĕ мероприяти йĕркелеме те чылай пулăшать.

### *Ют çĕр-шывсенчен тĕслĕх илетпĕр*

**– Эсир – куçаруçă. Тăван чĕлхепе те питĕ илемлĕ калаçатăр, темиçе ют чĕлхе пĕлетĕр. Мĕншĕн çак профессие суйласа илтĕр?**

– Эпĕ – Элĕк чăвашĕ, Ехремкассинче çуралса ӳснĕ. Ялта пурăннăран вырăсла начартарах пĕлеттĕмĕр, çапах та шкулта нимĕç чĕлхине шĕкĕлчеттĕмĕр. Темшĕн çак чĕлхене килĕштертĕм, вырăсла та таса калаçма вĕренес килетчĕ. Çавăнпах пурнăç çулĕ Горькири /Чул хулари/ ют чĕлхесен институтне илсе çитерчĕ. Унта акăлчан, француз тата испан чĕлхисене ăша хыврăм. Диплом илнĕ хыççăн нумай çул çар тăлмачинче ĕçлеме тӳр килчĕ. Чылай çĕр-шывра пулса куртăм, унти пурнăçпа паллашрăм. Тăван çĕр туртатех çав, 20 çул каялла Çĕнĕ Шупашкара куçса килтĕмĕр.

**– Вячеслав Яковлевич, паянхи кун эсир хăвăр пурнăçăра велосипедçăсен юхăмне аталантарас ĕçе халаллатăр. Спортпа хăçан туслашрăр?**

– Ача чухне пирĕншĕн велосипед чăн-чăн тĕлĕнтермĕш япала пулнă. Кашни ун çине ларса ярăнма, çил пек вĕçтерме ĕмĕтленетчĕ. Анчах пирĕн вăхăтра сайра тĕл пулакан транспортчĕ, çавăнпа тус-юлташăннипе çӳреттĕм. Çитĕнсе çитсен мана та велосипед туянса пачĕç. Ялтан тухса кайсан ун çинчен маннă тесен те юрать, хула тăрăх велосипедпа çӳрес йăла çук пирĕн çĕр-шывра. Тата Хусан юхан шыв техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн пăрахут çинче ĕçлекенскерĕн велосипед çине ларма вăхăт та пулман. Каярах Байконуртра çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçларăм. Ют çĕр-шывсенче пулса курнă хыççăн икĕ кустăрмаллă юлташпа тепĕр хут туслашрăм. Мурманск облаçĕнчи атомщиксен станцийĕнче ĕçленĕ чух та çил-тăманлă, юрлă çанталăка пăхмасăр велосипед çине ларма тăрăшаттăм. ЧР Экономика министерствине ĕçе вырнаçсан та икĕ кустăрмаллă тусăмран уйрăлмарăм, Çĕнĕ Шупашкартан республикăн тĕп хулине кашни кун çӳрерĕм. Паянхи кун та тăван яла çитме велосипед пулăшать /унта кайма 90 км кăна/, хулара çӳремелли транспорт та вăлах.

**– Ют çĕр-шывсенче ку енĕпе лару-тăру еплерех-ха?**

– Европăра та, АПШра та велосипедпа çӳрес йăла вăй илнĕ. Лондон, Париж, Коппенгаген, Амстердам хулисем ку енĕпе пуринчен малта пулĕ: вĕсенче велосипедпа çӳремелли çулсем те пур, ятарлă велостанцисем те ĕçлеççĕ... Чăваш Енре те велоçулсем тума палăртнă, çак шухăша Шупашкар хула администрацийĕ ырласа йышăнчĕ. Çавăн пекех хăшпĕр районта та велоçулсем сарас ыйтăва хускатнă. Планпа килĕшӳллĕн виçĕ теçетке çул хушшинче 90 çухрăма яхăн трасса хумалла. Анчах ку çителĕксĕр, эпир шутланă тăрăх 300 км кая мар кирлĕ. Атăл леш енне кайма çулсем пулсан аван. Çывăх çулсенче хулара икĕ кустăрмаллипе туслисем валли лайăх услови пуласса шанатпăр.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ калаçнă**

*Ят-сум*

# Ухăçăсен «тӳпинчи» икĕ çăлтăр

***Чăваш Енре ухăçăсен спорчĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче вăй илнĕ. Çак пулăм сумлă икĕ çынпа уйрăлми çыхăннă. Пĕри – РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕ Ольга Авдеева, çичĕ теçетке урлă каçнă пулин те халĕ те çамрăксемпе ĕçлет; тепри – тĕнче чемпионки Ирина Солдатова, унăн кун-çулĕ 37 çултах вăхăтсăр вĕçленнĕ.***



*● Валерий Яриков, Ольга Авдеева, Сергей Федоров.*

### *Спорта парăннă педагог*

Ольга Сергеевна çулне кура мар хăйне çирĕп тытать. «Ачасемпе хутшăнни ватă чуна çĕклентерет, канма та вăхăт çукрах – ялан ĕçре, – терĕ тренер кĕркуннехи сумлă юбилейне аса илнĕ май. – Чăваш Ене куçса килни 50 çул иртрĕ пулин те халĕ те çав вăхăт асран тухмасть».

20-мĕш ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче Пушкăрт Республикинчи Бийск патшалăх педагогика институчĕн физкультура кафедринче ĕçлекен преподавательсен пĕр ушкăнне ухăçăсен спортне аталантарма хушаççĕ, çав йыша çамрăк хĕре те илеççĕ. Çапла вара çăмăл атлетикăпа тата гимнастикăпа туслă Ольга Авдеева 1970 çулта пĕрремĕш хут алла ухă тытать. Пĕр вăхăтрах тĕрлĕ ăмăртура хула-республика чысне хӳтĕлесе ăсталăха туптакан тренер ачасене те ухăран пеме вĕрентет. Каярах пултаруллă спортсменка СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçлать. 1973 çулта тĕрлĕ лару-тăрăва пула Пăрачкав тăрăхĕнчи Куславкка салинче çуралнă хĕр çемйипе Чăваш Ене куçса килет.

«Труд» спорт обществин ертӳçи Василий Филиппов пир-авăр комбиначĕ çумĕнчи «Спартак» спорт шкулне вырнаçтарчĕ. Çав тапхăртанпа пĕр улшăнми унта вăй хуратăп», – иртнине аса илчĕ педагог. Чăн та, Чăваш Енре Ольга Сергеевна ĕçлеме пуçласан пирĕн республикăра ухăçăсен спорчĕ вăй илме тытăнать. 1973 çултах Шупашкарта пĕрремĕш хут хула чемпионачĕ иртет, çĕнтерӳçисем – Ольга Авдеевăпа Василий Кириллов /В.Чапаев ячĕллĕ заводăн физкультура инструкторĕ/. Часах сумлă тренерăн вĕренекенĕсем те малтанхи çитĕнĕвĕсемпе савăнтарма тытăнаççĕ. 1974 çулта 16-ри Сергей Огурцов СССР спорт мастерĕн нормативне тултарать, хĕрсен команди çĕр-шыв чемпионĕн ятне çĕнсе илет.

Вĕсен çитĕнĕвĕсене кура «Труд», «Урожай», «Буревестник» спорт обществисен çумĕнче пултаруллă тренерăн вĕренекенĕсем уйрăм секцисем уçма тытăнаççĕ. Чăваш Енре ухăçăсен йышĕ çултан çул ӳсме пуçлать, спортсменсем те тĕрлĕ ăмăртуран çĕнтерӳпе таврăнаççĕ. Ирина Солдатова – тĕнче чемпионки; Юрий Леонтьев – тĕнче рекордсменĕ, унăн ятне Гиннесс рекорчĕсен кĕнекине кĕртнĕ. Вăл Олимп вăййисене икĕ хут хутшăннă; Андрей Абрамов – тĕнче чемпионачĕн призерĕ, вăл та Олимпиадăна хутшăннă; Елена Кузнецова – спортăн тĕнче класлă мастерĕ, Европа тата тĕнче ăмăртăвĕсен призерĕ. 1985 çулта Шупашкар СССР чемпионатне йышăнать, чи сумлă наградăсем каллех пирĕн ентешсен аллинче. ЧР физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Игорь Камаданов, РСФСР тава тивĕçлĕ тренерĕсем Валерий Яриковпа Сергей Федоров – пурте Ольга Авдеева воспитанникĕсем.

Анчах иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ахăр самана пуçланнă. Спортсменсемпе тренерсем пĕрин хыççăн тепри пăраха-пăраха кайнă, спорта чунтан парăннисем кăна юлнă. Ольга Сергеевна пĕлтернĕ тăрăх – юлашки çулсенче ухăçăсен спорчĕ тепĕр хут вăй илме тытăннă, çапах та ĕçлемешкĕн услови çителĕксĕр. «Паянхи кун шкулта 150 яхăн ухăçă вĕренет. Анчах вĕсен йышĕ ялан улшăнать. Калăпăр: вуннăн килеççĕ тĕк – тепĕр вуннăшĕ тухса каять, çавăнпа пултаруллă спортсмена çитĕнтерме йывăртарах», – палăртать педагог. Хальхи вăхăтра тренер патĕнче 26 çын ăсталăха туптать, вĕсенчен 6-шĕ – чи маттуррисем: Марина Кириллова – республика чемпионки, çамрăксен ăмăртăвĕн тата тĕрлĕ турнир çĕнтерӳçи; Глеб Дзюба 11-мĕш класра вĕренет, Раççей спорт мастерĕ, Чăваш Ен чемпионачĕн кĕмĕл призерĕ; Дмитрий Афанасьев республика чемпионатĕнче бронза медаль çĕнсе илнĕ... Ольга Авдеевăн чи çывăх тусĕ тата пулăшуçи – Дмитрий Аверкиев. Спорт мастерĕ ăмăртусене хутшăннисĕр пуçне ачасемпе те ĕçлет.

«Ухăçăн мĕнлерех пулмалла?» – кăсăклантăм эпĕ. «Чи кирли – чăтăмлăх. Чăтăмлинчен кăна ăста спортсмен çитĕнтерме май пур, мĕншĕн тесен тĕл пеме вĕренмешкĕн чылай вăй хума тивет», – пулчĕ хурав. Чăн та, пĕрремĕш çитĕнӳччен мĕн чуль кĕтмелле, çавăнпах пулĕ ухăçăсен ăмăртăвĕнче палăрма çăмăл мар.

### *Салтак пек маттурччĕ*

Çапла хаклать хăйĕн вĕренекенне Ольга Сергеевна. Сăмах – ухăран перес енĕпе тĕнче тата çĕр-шыв чемпионки, Совет Союзĕнчи халăхсен спартакиадин тата çĕр-шыв кубокĕн çĕнтерӳçи, СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Ирина Солдатова пирки. «Çӳллĕ те çирĕп кĕлеткеллĕ пулнăран çар çыннине аса илтеретчĕ. Хастар та хăюллăччĕ, нимĕнле йывăрлăхран та хăрамастчĕ. Пур енĕпе те малта пулма тăрăшатчĕ», – терĕ тренер.

Пултаруллă спортсменка ухăçăсен секцине епле лекнĕ-ха? Ира Солдатова спорт шкулĕпе юнашар пурăннă. Баскетболла выляма юратакан, çăмăл атлетикăпа тата гимнастикăпа туслă хĕр ача ухăçăсен ăмăртăвне курать те хăйне евĕрлĕ хатĕрпе аппаланса пăхма шухăшлать. Кунран кун тира çӳрекенскер кăсăклансах каять, секцие çырăнать /пĕрремĕш тренерĕ – Сергей Федоров/. Хăйĕнпе пĕрле юлташĕсене те чĕнет. Тĕлĕнмелле те – тăрăшуллă хĕр ача çичĕ уйăхранах спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарать. Анчах ăнсăртран шкул ачи секцие çӳреме пăрахать. «Мĕн пулнă? – пăшăрханаççĕ тренерсем. – Ман валли мар!» – татса хунă Ира. Ăсталăх çитменнишĕн куляннă иккен 8-мĕш класс ачи. Кăшт вăхăт иртсен каялла таврăнать те пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеме тытăнать. Тăрăшни сая каймасть: шкулта вĕреннĕ чухнех Ирина Солдатова Пĕтĕм Раççейри тата Пĕтĕм Союзри ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнать. Пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă хĕре часах çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командин йышне илеççĕ. Еплерех пысăк савăнăç! Тинех Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусем.

1984 çулта Чăваш Ен спортсменкине СССР кубокĕн чи çӳллĕ пьедесталĕ çине хăпарма пĕр утăм кăна çитеймен /ăмăртура иккĕмĕш кăтартупа палăрать/, тепĕр çул вара вăл çĕр-шыв чемпионатĕнче çĕнтерет. 1985 çул уншăн чи пĕлтерĕшлĕ çулталăк пулнă: планетăри чи вăйлă ухăçăсене парăнтарса тĕнче чемпионкин ятне çĕнсе илет пирĕн ентеш. Анчах çăмăлах килмен çак çĕнтерӳ: Сеултa /чемпионат унта иртнĕ/ тупăшу темиçе кун пынă, малтан спортсменка ыттисемпе танлашайман, каярах пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн балсем хушăнма тытăннă, юлашки кун вара Чăваш Ен ухăçи тĕл персе тĕнче рекордсменкине кая хăварма пултарнă.

Республикăна çĕнтерӳпе таврăннă пике Андрей Прокунинпа çемье çавăрать. Мăшăрĕ – спортсмен, ухăçă, СССР спорт мастерĕ. Каярах вĕсен ывăл çуралать. Пĕр тапхăр каннă хыççăн вăл вун-вун турнира хутшăнать. Пекинра, Швецире иртнĕ турнирсенче пĕрремĕш вырăнсене йышăнать. Анчах яланах ăнăçмасть, пĕр-пĕр ăмăртура лайăх кăтартупа палăраймасан çав тери кулянать. Çакă е тата ытти сăлтава пула чемпионка чирлекелеме тытăнать, вара вăл тренера ĕçлеме куçать: «Феникс» реабилитаци центрне çӳрекен сусăрсене ухăран пеме вĕрентет. Малтанхи çулсенчех унăн воспитанникĕсем турнирсенче медальсем çĕнсе илеççĕ. Мĕнлерех хĕпĕртенĕ пулĕ çамрăк тренер. Çав тапхăртах Ирина Солдатова дартспа кăсăкланма пуçлать, каярах спорт мастерĕн ятне тултарать. Пĕр вăхăт республикăри дартс федерацине те ертсе пырать. Анчах йывăр чир ăна ураран ӳкерет, сыватмăшсенче сипленет. Укçа-тенкĕ çуккипе тĕнче чемпионатĕнче парнеленĕ кубока та саклата хурать, анчах усси пулмасть – 2002 çулхи нарăсăн 17-мĕшĕнче 37-ри спортсменка пурнăçран уйрăлать.



*● Ирина Солдатова.*

Паянхи кун Шупашкарта Ирина Солдатова ячĕллĕ спорт шкулĕ ĕçлет, ăна асăнса çулсерен ухăçăсен турнирĕ йĕркелеççĕ. Çамрăк спортсменсем чемпионкăран тĕслĕх илсе ун пек пулма тăрăшаççĕ. Ольга Сергеевна та хăйĕн вĕренекенне ырăпа кăна аса илет. «Ăшă кăмăллăччĕ вăл, пурне те пулăшатчĕ, хавхалантарма пĕлетчĕ. Эпĕ ăçта та пулин кайсан вăл мана яланах чечекпе кĕтсе илетчĕ», – вĕçлерĕ калаçăва хисеплĕ тренер.

■ **Андрей ПЕТРОВ**

**Кăларăма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

*Ăмăртусен хроники*

# Европăна парăнтараççĕ

***Кашни спортсмен тĕрлĕ шайри ăмăртура çĕнтерсе пысăкрах турнирсене хутшăнма ĕмĕтленет. Юлашки тапхăрта пирĕн ентешсем – Чăваш Енри чи çамрăк шашист Даниил Леонидов, сумо енĕпе ăсталăха туптакан Анастасия Тарасова, Александра Козлова штангистка, Надежда Федоровăпа Екатерина Гаврилова кĕрешӳçĕсем тата ыттисем Европа ăмăртăвĕсенчен тĕрлĕ медальпе таврăнчĕç.***

Нумаях пулмасть савăнăçлă хыпар пĕлтĕмĕр: Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптанă Дарья Спиридонова гимнастка Европа чемпионатĕнче палăрнă. Хальхи вăхăтра Мускаври «Самбо-70» команда чысне хӳтĕлекен пике спорт гимнастики енĕпе Болгарире иртнĕ ăмăртăва хутшăннă. Вăл нумай енлĕ кĕрешӳре тата уйрăм хăнăхтарура икĕ бронза медаль çĕнсе илнĕ.

Тепĕр ентешĕн, паллă триатлонçăн Дмитрий Ефимовăн çамрăк спортсменсен иккĕмĕш хут иртекен Олимп вăййисене хутшăнма май пулĕ. Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕ Европăри суйлав ăмăртăвĕсенче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Унччен маларах Иван Трофимовпа Дмитрий Горбунов ишевçĕсем çĕр-шыв чемпионатĕнче çĕнтерсе Европа чемпионатĕнче вăй виçме путевка çĕнсе илнĕ. Бадминтон енĕпе вун-вун ăмăртура палăрнă Юрий Степановпа Павел Попова та */сăн ӳкерчĕкре/* Португалире иртекен Европа турнирĕнче ăнăçу сунатпăр.



**Олег МАСЛОВ.**

*Футбол*

# «Сăран мечĕк» – Вăрнарсенче



***Шупашкарти «Труд» стадионта вăтам çулсенчи çамрăк футболистсем «Сăран мечĕк» республика ăмăртăвĕн кубокне çĕнсе илессишĕн вăй виçнĕ.***

Тупăшăва чи лайăх 4 команда хутшăннă, вĕсем Вăрнарпа Йĕпреç районĕсен, Шупашкарпа Çĕмĕрле хулисен чысне хӳтĕленĕ. Тĕп парнене «Химик-Август» тивĕçнĕ: финалта Вăрнар футболисчĕсем республикăн тĕп хулин командине 3:2 шутпа çĕнтернĕ. Шупашкарсен – иккĕмĕш вырăн. Бронза медальшĕн тепĕр икĕ команда вылянă, ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе Çĕмĕрлери «Пингвин» пьедесталăн виççĕмĕш картлашки çине хăпарнă.

Йăлана кĕнĕ тăрăх «Сăран мечĕк» турнир виçĕ ушкăнра иртет: аслă классенче вĕренекенсем, вăтам çулсенчисем тата кĕçĕннисем. Аслисен ӳсĕмĕнчи вăйăсем çу уйăхĕнчех иртнĕ, çĕнтерӳçи – Шупашкар команди. Чи пĕчĕккисен финалти тупăшăвĕсем çак уйăхра Сĕнтĕрвăрринче пуçланмалла. Палăртмалла: футбол ăмăртăвĕсене çулсерен 30 пине яхăн ача хутшăнать.

**Егор АНДРЕЕВ.**

## Сиплевçĕ

### Ыхра

Мĕн авалтанпах ыхрапа тĕрлĕ апат хатĕрленĕ чухне кăна мар, нумай чиртен сипленме усă курнă.

**Ӳслĕкрен.** 11 шăл ыхрана тата пуçлă сухана /1 кирлĕ/ 1 литр сĕте ярса çемçеличчен вĕретмелле. Сăрăхтармалла, тутине кура пыл хушмалла. Кашни сехетрен 1 апат кашăкĕ ĕçмелле.

**Юн тымарĕсене тасатма.** Инфарктран, атеросклерозран, гипертонирен, стенокардирен сыхланма пулăшать. Çур литрлă кĕленче савăта пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ ыхра вĕтетсе хумалла, шурă эрех тултармалла, çăтă хупмалла. Хутăша 2 эрне ăшă вырăнта тытмалла, сăрăхтармалла. Кăнтăрлахи апатчен 20 минут маларах 2 тумламран ĕçме пуçламалла /ăшă шывпа хутăштармалла/. Малалла кашни кун 1 тумлам хушса 25 тумлама çитермелле. Ун хыççăн çавăн пекех чакарса пымалла.

### Пĕрле сывлăха ырă витĕм кӳрессĕ

Хăш-пĕр апат хутăшĕ çын организмне эмел пекех лайăх витĕм кӳрет. Пахча çимĕç, улма-çырла сĕтпе пĕрле тата унсăрăнах тĕрлĕ тытăма пулăшать. Вĕсене тутине кура хамăра кирлĕ чухлĕ хушмалла.

**Пан улми, кишĕр, импĕр** иммун тытăмĕшĕн питĕ лайăх, ăна çирĕплетессĕ.

**Пан улми, сĕт, чĕпĕтекен пăрăç** çăвартан япăх шăршă кĕрсен пулăшассĕ, температурăна чакарассĕ.

**Арпус, ананас, пан улми** пӳрене, шăк хăмпине тасататассĕ, организмран ытлашши тăвара кăларассĕ.

**Пан улми, хăяр, сельдерей** пуç, вар-хырăм ыратнинчен хăтарассĕ, юнри холестерин шайне чакарассĕ.

**Хăяр, апельсин, импĕр** температурăна чакарассĕ, ӳте нӳретме пулăшассĕ, пит тĕсне лайăхлатассĕ.

**Пан улми, кишĕр, помидор** çăварти ырă мар шăрша пĕтерме, ӳт тĕсне лайăхлатма пулăшассĕ.

**Хăяр, пан улми, киви** ӳте нӳретессĕ.

**Сĕт, банан, ананас** организма витаминсемпе пуянлатассĕ, вар хытсан пулăшассĕ.

**Арпус, исĕм çырли, сĕт** рациона $B_2$ тата С витаминсемпе пуянлатассĕ, клеткăсен хастарлăхне ӳстерессĕ, иммунитета çирĕплетессĕ.

**Кишĕр, пан улми, груша, манго** юн пусăмне чакарассĕ, организма наркăмăшлă япаласенчен тасататассĕ, чир-чĕрпе кĕрешме май парассĕ.

### Мĕнле майпа хăвăрт чакармалла?

Нумай çыннăн гипертони чирĕ 40 çултан иртсен аталанать. Юн пусăмĕ ӳссен эмелсемпе пĕрлех курăксемпе те анлăн сипленессĕ.

1. Час-часах ӳсекен юн пусăмне йĕркене кĕртме календулăн спиртри шĕвекне чылай вăхăт ĕçмелле. Кунне 3 хут 20-40-шер тумлам ĕçмелле. Календулăпа сипленнĕ чухне пуç ыратни иртет, ĕçлес пултарулăх ӳсет, çын лайăхрах çывăрма пуçлать.

2. Улма-çырлапа пахча çимĕç сĕткенĕсен хутăшне ĕçни усăллă. Çак тĕллевпе 1-ер стакан кишĕрпе хĕрлĕ кăшман, çур стакан шур çырли сĕткенне хутăштармалла. Çавăнтах 100 грамм шурă эрех тата 250 грамм пыл хушмалла. Лайăх пăтратмалла, кĕленче савăта ямалла. Кунне 3 хут апатчен 1 сехет маларах 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле.

3. Мулкач курăкĕ /тысячелистник/ 3 апат кашăкĕ, 1-ер апат кашăкĕ катăркас чечекĕ, омела, чăрăш тăрри илмелле. Çак курăксене савăта хурса пăтратмалла. 1 апат кашăкĕ курăксен пуххине вĕренĕ 1 стакан шыва 3 сехетлĕхе ямалла. Çакăн хыççăн шĕвеке 5 минут вĕретмелле, сивĕнсен сăрăхтармалла. Кунне 3 хут чĕрĕкшер стакан ĕçмелле.

4. Юн пусăмне хăвăрт чакармашкăн ура тупанне пан улми уксусĕпе йĕпетнĕ татăксем кăштах вăхăтлăха хумалла.

5. Юн пусăмĕ ӳснине туйсанах кравать çине ӳпне выртмалла. Çурăм шăммин мăй тĕлĕнчи пайне икĕ енчен те пăр катăкĕсем хумалла. Вĕсем ирĕличченех çапла выртмалла. Çакăн хыççăн ку вырăна кирек мĕнле çу сĕрсе асăрханса сăтăрмалла. Юн пусăмĕ чакма пуçлать. Кун пек 3 кунта пĕр хут сипленме юрать.

### Ыйту-хурав

### Лимонсăр пурăнаймастăп

**Эпĕ пĕрмаях лимон çиетĕп. Унсăр пĕр кун та пурăнаймастăп. Ăна чейе, кофĕне, кирек мĕнле апата та хушатăп. Çакă сывлăхшăн сиенлĕ мар-и?**

**В.КУЗНЕЦОВА.**
Шăмăршă районĕ.

Организмра витаминсем, уйрăмах С витамин çитмесен часчасах лимон çиес килет. Çапах та ăна вар-хырăмăн тата вун ик пумăклă пыршă язви, вăраха кайнă гастрит /вар-хырăм сĕткенĕн йӳçеклĕхĕ пысăк пулсан/, ват хăмпи шыççи, панкреатит, аллерги чухне, хулăн тата çинçе пыршă шыççан çиме юрамасть. Лимон усăлăхĕ çинчен: вăл юн пусăмне йĕркеллĕ виçене çитерме, иммунитета çирĕплетме пулăшать. Çапах та сипленес тĕллевпе тухтăрпа канашласан вырăнлăрах.

### Пĕчĕккисем валли хатĕрлетпĕр

#### Аш нимĕрĕ

**100 грамм ĕне ашĕ, 500 мл шыв, 2 чей кашăкĕ услам çу, тăвар кирлĕ.**

Аша пысăк мар касăксем туса вакламалла, пысăках мар кастрюльте пăшăхламалла. Сивĕнсен аш арманĕпе икĕ хут авăртмалла, блендера ярса вĕтетмелле. Аш нимĕрне кăштах шӳрпе ямалла, тăвар сапмалла. Лайăх пăтратмалла, услам çу хушмалла.

#### «Хĕвел» икерчĕ

**700 грамм кавăн, çур стакан сĕт, 2 çăмарта, 2 апат кашăкĕ сахăр, 1 стакан çăнăх, ӳсен-тăран çăвĕ, тутине кура тăвар кирлĕ.**

Кавăна вĕтĕ теркăпа хырмалла. Сĕт хушса кастрюльте пиçичченех пăшăхламалла. Çăмарта шуррине сарринчен уйăрмалла. Сивĕнсен кавăна сахăрпа кăпăшлантарнă çăмарта саррине, тăвар хушмалла. Çăнăх ямалла. Икĕ енчен те ăшаламалла. Хăймапа çиме аван.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

---

*Халăх çӳпçинчен*

# Тăвар вăрри



#### «Арçури» халапа аса илсе

Тăвар вăрри – куçса, ишĕлсе тăракан шутсăр тарăн çырма. Чăнкă сăрт-ту айккинчен çăл куçсем тухса тăракан вырăн. Авалтан кунта арçурисем, усал-тĕселсем пурăнассĕ, айкашассĕ тенĕ.

Арçури çырминчен чăнкă ту çине çичĕ сакăлтăкран иртсе, çичĕ пăрăнчăкран çаврăнса улăхмалла. Çав вырăнсенче ĕнтĕ лав çумне арçурисем çыпçăнассĕ, ăна сиен кӳрессĕ тенĕ.

– Хытă айкашассĕ, урапа тĕнĕлне е турта-пĕкке хуçассĕ е лава йăвантарса ярассĕ. Лашана пӳлсе чăкăмлаттарассĕ. Тата – ухлата-ухлата кăшкăрассĕ, лахлата-лахлата куласĕ. Чуна кăларас пек çухăрса хăратассĕ.

Лавçăсем вара чăнкă ту çине улăхса çитсен Тамăкран тухнă пек туяссĕ. Канса илсен Итĕлмес ялĕ еннелле уттарассĕ. Унти арманран иртсен ирĕке тухрăмăр тесе шухăшлассĕ.

#### Мĕншĕн Тăвар вăрри тăвайкки?

Çак вырăнта Тапанар /Енчĕк çырми, шывĕ/ юхса выртать. Атăл çумĕнчи улăха юхса тухнă çĕре юшкăн хăварса тухакан вырăна Тапанар юхан шыв вăрри тенĕ. Шывçи уççи тăрăх лавпа çӳреме лаша çулĕсем йĕркеленĕ.

Асăннă тăвайкки йĕкĕреш: пĕри Итĕлмес еннелле, теприи Кĕчкей еннелле улăхса аннă.

Кĕчкей тăвайкки тулашĕнче пĕчĕк лапка çерем пур, çавăнта тăвар сутуçисем /Шур Атăл, Чулмаç/ тăрăхĕнчен тăвар илсе килнĕ. Тăварĕ хаклă. Çтенкке Разин пăлхавĕ пулнă çул çывăхри ял çыннисем унти ампарти тăвара вăрланă.

Кам тăвар ытларах вăрланă, ăна тăвар татах хушса паратпăр тенĕ. Халăх ир-ирех лаша кӳлсе тăвар патне чуптарнă. Вĕсене казаксем сĕреке лартса кĕтнĕ. Тăвар пама пуçланă.

Вĕсенчен шахвăртса: «Эсĕ ун чухлĕ илмен ĕнтĕ», – тенĕ. «Илнĕ, илнĕ, Якăп пиччерен те ытларах илнĕ», – тесе ăмăртнă. Çапла вăрăсене тупнă...

Шанарпуçсем ытларах илнĕ тени юлнă халăхра. Кайран ял çумне Хура /çуннă/ юпа лартни çинчен те манмассĕ. Çавăншăн «Тапанар вăрри», «Тапанар тăвайкки» сăмахсем вырăнне – «Тăвар вăрри», «Тăвар вăрри тăвайкки» сăмахсем çирĕпленнĕ.

#### Ытти вырăнсем ăçта пулнă?

**1. Шыва кĕме юраман кӳлĕ. 2. Чул амăш хăвăлĕ. 3. Чул кăларакан Ахванас сăрчĕ – çырми. 4. Сĕвек ту.** Тăвар вăрри тăвайккинчи сивĕ, тăрă та пĕчĕк кӳлĕ çумĕнчи тарăн çырмара арçурисем пурăнассĕ тет. Вĕсем вăрмана пынă хĕр ачасене кăтăкласа култарса вĕлерессĕ имĕш. Çакскерсем арçурисем пулассĕ тет.

**Чул амăшĕ хăвăлĕ** – çĕр хăвăлĕ. Сĕвек ту кĕперĕ пулнă çырмара куçса тăракан вырăн пур. Ваттисем каланă тăрăх – çĕр хăвăлне авал вăрăсем виçĕ лаша кӳлсе кĕрсе çӳренĕ тет. Хăвăлĕ сĕвек туран Криуш тĕлĕнчи Чарту таран пулнă тет.

**Ахванас çырми.** Кĕчкей вăрманне хирĕç, Тапанар шывĕн сылтăм çыранĕнче усăлса тăнă. Халăх чарусăр: вăл нӳхреп тума, çурт-йĕр никĕсне яма унтан чул кăларнă. Савăлне çапаканĕ «Ах, ванас, ох, ванас» тесе каланăран вырăнне Ахванас теме пуçланă.

**Сĕвек ту.** Тапанар тăрăх улăхакан сăрта, çырмана Сĕвек ту тессĕ. Тăвайккийĕ 2 çухрăм, çырми 7 çухрăма яхăн тăсăлать.

#### Атăл енчи вырăнсем

1. Шăла ватакан çăл куç, Исай /Юсай/, Чупай, Кăнтăр хутти, Йăмра лаппи кӳллисем.

2. Кивĕ хупах, Чӳк ырри вырăнĕсем, Курт ай çаранĕсем.

Манăçа тухнă ĕнтĕ вĕсем. Халапсенче кăна юлнă. Çапла калани пур:

– Чăнкă ту айĕнчи çăл куç шывне ĕçсен шăл ванать; пыра ларать;

– Исай, Чупай кӳллисенче хуçи хушмасăр пулă тытман;

– Кантăр кӳллинче, кантăра /кĕлтисене, салккисене/ пусиччен пулă тытмалла пулнă иккен. Шĕшлĕ /çăрттан/ нумай тытнă;

– йăмра лаппинче тирçĕсем йăмра касса хуппине сӳнĕ, типĕтнĕ. Унтан вĕретсе тир сĕрмелли, тупкăламалли сăрă тунă, тир сăрланă;

– Атăл тăрăх бурлаксем çӳренĕ вăхăтра сутуçă çулла хупах /кабак/ лартнă, сутă тунă. Халĕ çав вырăна Кив хупах тессĕ;

– Чăвашсем Христос тĕнне йышăниччен авалхи тĕне, çут çанталăк тытăмĕнчи вăйсене ĕненнĕ. Вĕсене чӳклесе е тиха, е пăру, е така, е хуркăвакал, çерçи панă.

Вырăнĕсем: Атăл кукри, Атăл çинчи шыв çавраншĕ /яр/, шыв юхса кĕнĕ вырăнсем. Ырă вырăнтисене – Хĕрлĕ çыр – Красный яр, усал вырăна – Хаяр çĕр – Черный яр – усал, хура вырăн тенĕ.

Кĕчкей çывăхĕнчи авăра авал Чук ырри тенĕ. Кунта вырăс пулăçисен Чекури ятлă ялĕ ларнă.

Хĕрлĕ Куртай сăртĕнче – 200 метр çӳллĕшĕнче – чăваш ялĕ ларнă. Ун айĕнчи улăх-çарансене Куртай çыранĕ тенĕ. Кунта иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче 50-60 капан утă çулса пуçтарнă. Ун хыççăн вырльăха улăха янă.

Кĕркуннехи каçсенче, уйăх катăлса тухсан, арçурисем йĕкĕт пулса лаша утланса улăхра алхасса çӳренĕ тессĕ. Пĕрне Лашман ачи – Патӳш – тытнă тет, яла кĕртнĕ тет. Унтан хĕнесе кăларса янă имĕш. Лешĕ ялне ылханнă тет. Çавăнпа Патӳш ялĕ хĕсĕре юлса пĕтнĕ тет.

Калав-юмах-халап татах та тупăнĕ. Хальлĕхе çитĕ. Асăннă тата хăвăр тăрăхри паллă вырăнсене çитсе курмалла пултăр.

■ **Никифор НАУМОВ.**
Петр НАУМОВ ӳкерчĕкĕ

---

# Маттур та ĕçчен ман чĕрем

*Прозăлла сăвă*

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул... Вăхăт чупать пĕр канмасăр, ун чуппине тытса чарайман. Ман чĕрем те ĕçлет вăхăт пек канмасăр. Ун отпуск çук, канма вăхăт çук, уяв та уншăн нихçан та çук. Эп ывăнса канма выртсан та пĕр минут та уншăн канлĕх çук.

Тапать, сикет вăл, юн уçлать, юн çулĕпе юна чуптарать. Пуçа та юн кирлĕ, ӳпкепĕвере те, сула-пӳрене те, алă-урана – пĕтĕм ӳт-пĕве... Таса юн кирлĕ пурне те. Унсăр пурнăç мала каяс çук. Чĕре сывă чух ун ĕçне туймастпăр, унăн йывăр ĕçне пит хисеп тумастпăр, ăна мĕн кирлине пĕлме тăрăшмастпăр. Эрех сиенне те пит шута илместпĕр, табак тĕтĕмĕпе наркăмăш çăтатпăр, кирлĕ-кирлĕ маршăн харкашса илетпĕр, ĕçчен чĕрене сиен çеç кӳретпĕр. Чĕре хурланса йĕнине темшĕн-çке эпир илтместпĕр. Кун пек айăп манăн та, паллах, пулнă...

Пит йывăр пулсан та чĕрӳ сан ĕçлет. Вăл ĕçрен тухсассăн сан пурнăçу пĕтет. Вăл сана упрасшăн, кун-çулна тăсасшăн. Пурне те тӳсет. Çыннăн кун-çулĕ тĕрлĕрен килет. Йывăрри те, паллах, кашниннех пулать. Манăн кун-çулăм çăмăллăн иртмен. Тем те тӳсме тивнĕ манăн чĕреме. Улттăра чухне эпĕ аттесĕр юлнă, анне ăш-пилĕсĕр эпĕ çамрăклах юлнă. Çăкăр çуккине те тӳснĕ тăлăхсем.

Ывăлăм вилни те пысăк хуйхă кӳчĕ. Амăшĕ вара чирлесех ӳкрĕ, вăхăтсăр кайрĕ çутă тĕнчерен. Çирĕм çул ытла çумра мăшăр çук. Пĕчченлĕх вăл хуйхă, вăл пысăк инкек те асап... Пĕчченлĕх – тӳрленми суран.

Вăрçă нуши-терчĕ ахалех иртмерĕ: вăтăртах хавшарĕ ман ĕçчен чĕрем. Чирлĕрех пулсан та вăл маншăн ĕçлерĕ. Ĕçлет тăрăшсах паянхи кунччен. Пуçран аманса тăна çухатсан та чунăма упрарĕ ĕçчен чĕрем, кун-çул парнелерĕ мана пурăнма. Сываласчĕ тесе тăрăшрăм чылай. Пур пĕрех сывалтăм теме çук. Ĕçчен чĕрем, эпĕ сана юратрăм. Эсĕ те юратрăн – туятăп чунăмпа. Тăхăр вунна çитрĕм икĕ çул каялла. Çитет пулĕ темерĕн мана пурăнса. Татах пурăнмашкăн ĕмĕтĕм сӳнмен. Начар мар туятăп эпĕ паян хама.

Чĕрем манăн питĕ ырă, хастар та ĕçчен. Эпĕ те пулăшатăп ăна кунсерен. Ăна мĕн кирлине шута илетĕп. Тĕрлĕ хускану тăватăп кунсерен, çуран утатăп чĕре ыйтнă пек. Йĕлтĕрпе çӳретĕп, сывлăх тата ыр кăмăл пухатăп юр çинче. Сиплĕ сывлăш кирлине туйса вăрмана каймашкăн нихçан ӳркенмен. Эрех-сăрапа та туслă мар, табак тĕтĕмне ăша яман. Ĕçетĕп-çиетĕп чĕре хушнă пек. Ĕçе эп юратнă пĕчĕкрен. Ĕçре эп туятăп пурнăç илемне. Манăн ĕçпе пĕр шухăшлă ĕçчен чĕрем.

Ĕçре, пурнăçра çук мар хисепĕм. Тус-юлташ, тăван ялăм Шарпаш хисеплет мана. Тăван çĕр-шывăм манмасть. Награда нумай, унпа эп пуян. Ачасем манăн ырă, хам пекех хисепре. Юратассĕ мана мăнуксем. Урăх мĕн-ши кирлĕ тата ват çынна? Хисеп вăл хаклă кирек камшăн та. Вăл çĕклет кăмăла, вăй парать савăнса пурăнма.

Тав тăватăп сана, юратнă чĕрем. Тав тăватăп сана пит ĕçчен чĕрем. Тавах, тӳсĕмлĕ чĕрем. Сана тав туса çак сăвва хайларăм. Сана мухтаса ман юрлас килет. Вăрăм пурнăç мана парнелерĕн, ывăнма пĕлмесĕр эс маншăн ĕçлерĕн. Пурнăçран хаклă пурлăх çук çутă çак тĕнчере.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ**

### Сире телей сунмастăп

**Аслă Британири 52 çулти Дэвид 28 çулти Сандра Хардипе тĕл пулма пуçласан арçыннăн йăмăкĕ Энн Даффи кулянса ӳкнĕ. 50 çулти Энн çак пĕрлĕхе килĕштерменнине систернĕ. Пĕр-пĕрне юратакансем мăшăрлану кунне палăртсан пиччĕшĕшĕн «тăрăшакан» хĕрарăм чăтса тăрайман.**

**Туй пулмалли кунхине вырăнти мэрире ир-ирех телефон шăнкăртатнă. Ку Энн пулнă, анчах та Сандра Харди калаçать тесе пĕлтернĕ, туйне ирттересшĕн мар имĕш. Çакăн хыççăн вăл пиччĕшне шăнкăравланă: «Эпĕ сана уйăлассинчен хăтартăм». Çапах та çамрăксен ĕмĕтне татма май килмен – тепĕр 20 кунран вĕсем пĕр çемьене пĕрлешнине регистрациленĕ.**

**Энн уява пынă çамрăк мăшăра темĕн те пĕр каласа вăрçнă. Дэвидпа Сандра полицие шăнкăравланă. Суд харкашу пуçаракана 2 уйăхлăха арестлеме йышăннă.**

---

### Курав

# Кашни çын – хăй уйрăм тĕнче

***Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче Сергей Патшин художникăн "Сакральная Чувашия" куравĕ ĕçлеме пуçларĕ. Ӳнерçĕне пурнăçĕнчи паллă пулăмпа ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, ĕçтешĕсемпе ентешĕсем саламларĕç.***

С.Патшин – художник, психолог, нумеролог, çыравçă. Вăл Аслă Елчĕкре çуралса ӳснĕ. Пĕчĕклех унра ӳнер пултарулăхĕ палăрнă: йывăçран касса тĕрлĕ япала ăсталанă, живописпе кăсăкланнă. Уйрăмах хĕрарăмсен портречĕсем тата натюрмортсем аван пулса тухнă. Сергей Николаевичăн пĕрремĕш куравĕ ЧР Наци библиотекинче 1994 çулта уçăлнă. Хальхи курава художник-живописец нумерологие халалланă. Ĕçсене çирĕп йĕркепе номерленĕ, кашнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ. Хисепсемпе С.Патшин 1990 çулта кăсăкланма пуçланă. Хальхи вăхăтра Сергей Николаевич Мускавра ĕçлесе пурăнать, нумерологипе лекцисем вулать. Арт-терапи мелĕсемпе усă курса картинăсем ӳкерет. Автор хăйне психологи енĕпе профессионал тет. Картинăсем çырасси – уншăн чун киленĕçĕ.

"Сакральная Чувашия" курава музей директорĕ, ЧР Художниксен союзĕн членĕ Г.Козлов уçрĕ. Вăл çак пулăмăн пĕлтерĕшне тӳрех палăртма май çукки çинчен каларĕ, мĕншĕн тесен çын мĕн курнине çав самантрах тата тĕрĕс ниепле те пĕлтерейместĕн. Çут çанталăк хăйне евĕр ăс-хакăл пилленнĕ çынсем такамшăн та кăсăклă. Сергей Николаевич шăпах çак тытăм çинчен лайăх пĕлекенсен йышĕнчен. Художник курав йĕркелесе тĕнчене тытса тăракан куçа курăнман вăйсем пирки халăха каласа кăтартма тăрăшать.

"Сергей Патшин – тĕлĕнмелле çын, вăл пире чăваш халăхĕн чунĕнче, тĕнче курăмĕнче пытаннă вăрттăнлăхсене уçса парать, тавралăхри япаласене урăх куçпа пăхса хаклама вĕрентет", – терĕ культура министрĕ В.Ефимов. Нумерологи çут çанталăкпа, паллăсемпе тачă çыхăннине шута илсе Вадим Петрович художнике чăваш тĕррисене халалланă кĕнеке парнелерĕ.

Курав уçăлнă ятпа С.Патшина Чăваш халăх художникĕ В.Агеев саламларĕ. Вăл художникĕн ачалăхне, пурнăçĕнчи паллă самантсене аса илчĕ. Аслашшĕ тахçан философипе интересленнине пĕлтерчĕ. "Ахăртнех, пурнăçăн вăрттăн енĕсемпе кăсăкланасси унран куçнă", – терĕ. ЧР художниксен союзĕн председателĕ, Раççей халăх художникĕ Р.Федоров "Сакральная Чувашия" курав ăсчахсемшĕн те кăсăклă пулассине палăртрĕ.

Тарăн шухăшлă çак ĕçсен авторĕ этемĕн хисепсен вăйне туймаллине, вĕсем пурнăçра хăвăн вырăнна тупма пулăшнине палăртрĕ. "Кашни çын – хăй Тĕнче. Пурин те Çĕр çинче савăнса пурăнма ирĕк пур", – терĕ художник.

■ **В.НИКОЛАЕВА**

---

### Ас тăвăм

# Л.Доваторпа юнашар

***Лев Доватор генерал-майор Хĕрлĕ Çар тата Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин историне 1941 çулхи çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче нимĕç фашисчĕсемпе Мускав çывăхĕнче çапăçма кавалери корпусне йĕркеленипе кĕрсе юлнă.***

М.Фрунзе ячĕллĕ çар академийĕнче тарăн пĕлӳ илнĕ Лев Михайлович Совет командованийĕн пысăк шанăçĕ шутланнă. Корпусра пирĕн ентешсем те çапăçнă. Вĕсенчен пĕри – Шупашкар районĕнчи Хачăкра çуралса ӳснĕ Гаврил Мокин. Вăл кавалери корпусĕн пĕр чаçĕн йышĕнче тăшман тылĕнче иртернĕ виçĕ рейда хутшăннă, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Анчах ун çинчен каласа кăтартма питех кăмăлламастчĕ.

1941 çулхи çурла уйăхĕн 14 – авăнăн 2-мĕшĕсенче Л.Доватор ертсе пыракан кавалери корпусĕ пĕрремĕш хут тăшмана Смоленск облаçĕнче тустарнă, чĕрĕ вăйĕпе техникине нумай пĕтернĕ. Пĕррехинче корпусăн пĕр ушкăнĕ Межа тата Лама юхан шывĕсен тăрăхĕсенче пынă хаяр çапăçусене хутшăннă. Каярахпа Совет Çарĕн чаçĕсене тăшман тапăнăвĕнчен Волоколамск еннелле чакса пынă чухне хӳтĕленĕ. Çавăн чухне Г.Мокин аманнă пулин те стройрах юлнă.

1941 çулхи раштавăн 11-мĕшĕнче кавалери корпусĕ Мускав çывăхĕнчи Кубинка районĕнчен тăшман тылне виççĕмĕш хут рейда кайнă. Раштавăн 19-мĕшĕнче Руза юхан шыв хĕрринче вырнаçнă Палашкино ялĕ çывăхĕнчи хаяр çапăçура Лев Доватор вилмеллех аманнă. Йывăр суранланнисен шутĕнче Гаврил Мокин сержант та пулнă. Пирĕннисем пысăк çухату тӳснĕ, ирĕксĕр чакма тивнĕ. Çакăн хыççăн кавалери корпусĕ урăх йĕркеленеймен.

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн 1941 çулхи раштавăн 21-мĕшĕнчи Указĕпе Лев Доватор генерал-майора вилнĕ хыççăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн Гаврил Мокин сержант Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ. Награда хуçине çулталăкран тин тупнă.

■ **Галина МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районĕ



● *Г.Мокин сержант.*

---


![Реклама Пĕлтерӳ] Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
**РЕКЛАМА** Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм **ПĔЛТЕРӲ** Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07


**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» саккунĕн 5 статйипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийĕ вакантлă çак должноçсем уçăлни çинчен пĕлтерет:**

**– Шупашкар хулинчи Мускав район сучĕн председателĕн,**

**– Чăваш Республикинчи Етĕрне район сучĕн судйин,**

**– Чăваш Республикинчи Куславкка районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Шупашкар хулинчи Мускав районĕн 2-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Шупашкар хулинчи Калинин районĕн 7-мĕш суд участокĕн миравай судйин,**

**– Шупашкар хулинчи Калинин районĕн 8-мĕш суд участокĕн миравай судйин.**

**Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен» саккунĕн 5 статйин 6 пунктĕнче палăртнă документсемпе ыйтса çырнисене ĕç кунĕсенче 2014 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕччен – 8-12 тата 13-17 сехетсенче, 2014 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнассĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12-мĕш çурт, 302-мĕш пӳлĕм.**

**Конкурса хутшăнакансен ыйтăвĕсене ăçта тата хăçан пăхса тухассине палăртнă йĕркепе пĕлтерĕç.**

Администрация Чебоксарского района предполагает предоставление в аренду сроком на 11 месяцев земельный участок площадью 0,4800 га с кадастровым номером 21:21:000000:637, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Синьяльское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения), для проектирования и строительства объекта: "Линейно - кабельное сооружение ВОЛС ОАО "МегаФон" на участке г. Чебоксары, ул. Текстильщиков, 6 - ЛАЗ ЧеГЭС".

Контактная информация по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15, ( каб. №20).Телефон для справок 8(83540) 2-40-82.


## ПРОДАЮ

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

## РАБОТА

**425.Требуются строители** в Москву и Подмосковье для отделки зданий МВД: **сварщики** – 2000 руб. в день; **разнорабочие** – 1500 руб., отделочники – сдельно. Расценки хорошие; питание, проживание. Тел. 89255266193, Валентин Борисович.


Чăваш Республикин Раççей Президенчĕ çумĕнчи Полномочиллĕ представительстви тата Мускав чăвашĕсен ентешлĕхĕ пирĕн йăхташ, «ColdMusic» телерадиокомпани генеральнăй директорĕ, Мускав чăвашĕсен наци культура автономине йĕркелес ĕçĕн пуçаруçисенчен пĕри

**Анатолий Иванович Иванов**

64 çула кайса вăхăтсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе чунчĕререн хурланнине пĕлтерессĕ.

---


**чăваш халăх хаçачĕ**
**ХЫПАР**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ**
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-сурт, хушма хуçалăх" – 54806.

**Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ**
**Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ**
**РЕДКОЛЛЕГИ:**
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
**Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ**



**Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".**

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

hypar2008@rambler.ru

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar@mail.ru



Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

**РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнассĕ. Тел. 28-83-70.**

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленессĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7481. Заказ 2177.